чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

4 /26410/№ | Ытлари кун, 2014, кăрлач (январь), 14 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

# Уявсене пĕтĕмлетнĕ

***Кăрлачăн 13-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Правительствин членĕсемпе, влаçăн федераци органĕсен территори управленийĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе 2014 çулта пĕрремĕш хут канашлу ирттернĕ. Çĕнĕ çул тата Раштав каникулĕсен вăхăтĕнче республикăри культура, вĕренӳ тата спорт учрежденийĕсем халăх канăвне йĕркелес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине пĕтĕмлетнĕ.***

Культура, национальноçсен ĕçĕсен тата архив ĕçĕн министрĕ Вадим Ефимов пĕлтернĕ тăрăх – патшалăх театр тата концерт организацийĕсем, вулавăшсемпе музейсем 2013 çулхи раштавăн 20-мĕшĕнчен пуçласа 2014 çулхи кăрлачăн 13-мĕшĕччен Çĕнĕ çулпа тата Раштавпа çыхăннă 200 ытла мероприяти ирттернĕ, унта 30 пин ачапа çитĕннисем хутшăннă. Сахал тупăшлă çемьесенчи тата хевтесĕр 5 пине яхăн ача ыр кăмăллăх мероприятийĕсенче пулнă.

Çулленех Çĕнĕ çула тата Христос çуралнине халалласа ирттерекен ёлкăсене, концертсене, эстафетăсене, презентацисене, акцисене республикăри 187 пин ытла ача хутшăннă. Чăваш Ен шкулĕсенчи чи лайăх вĕренекенсем çавăн пекех Мускаври тата Чул хулари Çĕнĕ çул уявĕсенче пулнă.

Кăрлачăн 20-мĕшĕччен Наци музейĕнче Хĕл Мучи мастерскойĕнче Çĕнĕ çулхи мастер-классен ярăмĕ иртет, патшалăх тата муниципалитет вулавăшĕсенче кăрлачăн 10-мĕшĕнче Раштав поэзи вулавĕсем пуçланнă, вĕсем кăрлачăн 25-мĕшĕччен тăсăлаççĕ.

ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников пĕлтернĕ тăрăх – Пĕтĕм Раççейри «Спортпа сывлăх вунă кунлăхĕ» акци вăхăтĕнче 4 пине яхăн спорт учрежденийĕпе база ĕçленĕ, сывлăха çирĕплетес тĕллевпе 400 яхăн спорт мероприятийĕ ирттернĕ. Кăрлачăн 5-мĕшĕнче Сывлăхпа спортăн пĕрлехи кунне сывă пурнăç йĕркине килĕштерекен 150 пин çын хутшăннă. Спортпа сывлăх вунă кунлăхĕнче республикăра пурăнакан 334 пин çын хăйсен сывлăхне çирĕплетнĕ.

Республика Пуçлăхĕ физкультурăпа спорт занятийĕсене çӳреме мĕн пур ӳсĕмри çынсене кирлĕ майсемпе тивĕçтермеллине палăртнă.

Çĕнĕ çул уявĕсен вăхăтĕнче çăлав службин сотрудникĕсем лăш курмасăр ĕçленĕ. Чăваш Республикин Граждан оборони тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ Вениамин Петров пĕлтернĕ тăрăх – 2013 çулхи раштавăн 25-мĕшĕнчен пуçласа 2014 çулхи кăрлачăн 10-мĕшĕччен республикăра 55 пушара регистрациленĕ, вут-çулăмра 7 çын вилнĕ, вĕсенчен 5-шĕ – ӳсĕр пуçпа табак туртнипе.

Çĕнĕ çул тата Раштав каникулĕсене еплерех ирттернине пĕтĕмлетсе республика Пуçлăхĕ Чăваш Енре пурăнакансемпе хăнасен çакнашкал мероприятисенче харпăр хăйне тыткалас культури ӳснине çирĕплетнĕ. Çавна май кăçал 2013 çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан Çĕнĕ çул уявĕсен вăхăтĕнче право йĕркине пăсасси 30% чакнă. Апла пулин те хăрушсăрлăха тивĕçтерес ыйтусем тĕп вырăнтах юлаççĕ.

ЧР финанс министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Фарида Муратова 2014 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕ тĕлне федераци тата республика бюджечĕсенчен куçарнă, усă курмасăр юлнă укçа-тенкĕ çинчен пĕлтернĕ. Унпа кăçал усă курма палăртаççĕ.

Михаил Игнатьев журналистсене Раççей Пичет кунĕ ячĕпе саламланă. Республика Пуçлăхĕ информаци технологийĕсем питĕ хăвăрт аталанса пынă вăхăтра влаç органĕсен тата массăллă информаци хатĕрĕсен тĕллевĕ малтанхи пекех граждансене объективлă та тĕрĕс информаципе тивĕçтересси пулнине палăртнă.

**А.ЛЬВОВА**

*ЧР Пуçлăхĕн кубокĕ*

# Ăмăрту çĕнĕ çитĕнӳсемпе палăрчĕ





***Шăмат кун Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен ятарлă 3-мĕш спорт шкулĕн çĕнĕ манежĕ çăмăл атлетикăна юратакансене йышăнчĕ. Унта Чăваш Ен Пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн Пĕтĕм Раççейри ăмăрту иртрĕ.***

Çĕр-шыври 23 регионтан, çавăн пекех Беларуçпа Украинăран килнĕ спортсменсемпе вĕсен тренерĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата Раççейĕн пĕрлештернĕ командин аслă тренерĕ Алексей Мельников саламларĕç.

«Çăмăл атлетика – пирĕн республикăра чи анлă саралнă спорт тĕсĕ, унпа кашни виççĕмĕш çын туслă. Çавăнпа спорт инфратытăмне аталантарас енĕпе чылай ĕç пурнăçлатпăр. Акă çĕнелнĕ манежра эпир сирĕнпе иккĕмĕш хут тĕл пулатпăр. Кунта спортсменсем кăна мар, шкул ачисемпе ветерансем те хаваспах çӳреççĕ. Малашне çăмăл атлетикăпа кăсăкланакансем татах нумайланса, вĕсен йышĕнче чемпионсем çитĕнессе шанатăп», – терĕ Михаил Васильевич спортпа туслă çын сывлăхлă, вăйлă, илемлĕ пулнине палăртса.

Алексей Владимирович ЧР Пуçлăхĕн шухăшне малалла тăсса Чăваш Ен спорта, уйрăмах çăмăл атлетикăна, ăнăçлă аталантаракан регионсенчен пĕри пулнине каларĕ. «Республикăра çĕр-шыв шайĕнчи ăмăртусем йĕркелесси йăлана кĕчĕ, мĕншĕн тесен чăваш çĕрĕ çинче вĕсене ирттерме услови çителĕклĕ», – терĕ вăл пурне те уявпа саламланă май.

Çавăн пекех савăнăçлă парада ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников, ЧР Патшалăх Канашĕн комитечĕн председателĕ Петр Краснов, Çĕнĕ Шупашкар хула ертӳçисем Олег Матвеевпа Александр Сироткин, ЧР çăмăл атлетика федерацийĕн председателĕ, «АККОНД» пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Валерий Иванов, Олимп вăййисен кĕмĕл призерĕ, РФ спортăн тава тивĕçлĕ мастерĕ Олимпиада Иванова хутшăнчĕç.

Çĕнĕ Шупашкара сумлă хăнасем те килнĕ: РФ тава тивĕçлĕ тренерĕ Сергей Клюгин, тĕнче чемпионачĕн призерĕ Михаил Рыжов. Çӳллĕшне сикес енĕпе тĕнчипе палăрнă Олимп чемпионĕсем Анна Чичеровăпа Иван Ухов вара пирĕн республикăра пĕрремĕш хут мар. 2012 çулта Шупашкарта иртнĕ Раççей чемпионатĕнче çĕнтерсе вĕсем Лондонри Олимп вăййисене хутшăнма тивĕçнĕ. Çавăнпа спортсменсем Чăваш Ене килме яланах хавас. «Кунта кашнине ăшшăн кĕтсе илеççĕ, çыннисем ырă кăмăллă та тарават. Мăшăрăм Çĕрпӳ тăрăхĕнчен, çавăнпа эпир республикăра пĕрре мар пулатпăр. Паян та манăн чунăм çĕкленӳллĕ, çĕнĕ кермен те кăмăла килет. Çамрăк спортсменсене кунта ăсталăха туптама çав тери лайăх. Эпир ача чухне çакнашкал кермен пирки ĕмĕтленнĕ кăна, тренировкăсене сивĕ путвалта ирттерни халĕ те асрах-ха», – терĕ Анна Чичерова. Олимп чемпионĕ Иван Ухов вара куракансене хăйĕн ăсталăхĕпе тĕлĕнтерчĕ: çӳллĕшне 2,38 метр сиксе ăмăртăвăн рекордне çĕнетрĕ /Лондонра та вăл çак кăтартупа палăрнă/.

Чăваш Ен Пуçлăхĕн кубокĕ – çĕр-шыври тата республикăри чи пĕлтерĕшлĕ ăмăртусенчен пĕри, атлетсемшĕн çĕнĕ сезон çак турниртан пуçланать-çке. 2013 çулта Раççей статусне илнĕ хыççăн старта «элита» тата «ылтăн резерв» /20 çула çитмен юниорсем/ ушкăна кĕрекен атлетсем тухаççĕ. Кăçал вĕсем ăмăртура медальсен 19 комплектне çĕнсе илессишĕн вăй виçрĕç. 200 ытла спортсмен хăвăрт утас, чăрмавсем урлă чупас, йĕтре тĕртес, тăршшĕне тата çӳллĕшне сикес, 200, 800, 1500, 3000, 5000 метрлă дистанцисене парăнтарас енĕпе тупăшрĕç. Турнирта Чăваш Ен спортсменĕсем те чи пысăк парнене çĕнсе илессишĕн чылай-йăн вăй виçрĕç. Акă барьерсем урлă 60 метра чупса иртнĕ çулхи кăтартăвне çĕнетсе Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче вĕренекен Екатерина Блескина мала тухрĕ, Евгения Смирнова йĕтре тĕртекенсен хушшинче çĕнтерчĕ. Хăвăрт утакансен ăмăртăвĕнче пьедестал çине чăваш спортсменкисем Ирина Юманова, Вера Васильева, Марина Пандакова хăпарчĕç. Арçынсенчен Петр Трофимовпа Александр Яргунькин призерсен йышне кĕчĕç. Çавăн пекех хăйсен ушкăнĕсенче Елена Наговицына, Александр Новиковпа Владимир Леонтьев /3000 м/, Альбина Чинчикеева /2000 м/, Павел Красновпа Владимир Попов, Инесса Андреевăпа Зинаида Антонова /800 м/ тата ыттисем палăрчĕç.

**Андрей МИХАЙЛОВ**

# КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26

## Сиен _ 11,6 млн тенкĕлĕх

***Следстви комитечĕн Етĕрнери пайĕ Муркаш райадминистрацийĕн экс-пуçлăхĕ тĕлĕшпе харăсах 5 уголовлă ĕç пуçарнă. Ăна УК 286 статйин 2-мĕш пайĕпе айăплаççĕ – должноç полномочийĕсен картинчен тухнăшăн.***

Следстви версийĕпе килĕшӳллĕн 2011 çулта муниципалитет чиновникĕ обязательнăй йĕркепе рынок хакне палăртмасăрах 5 çынна, çав шутра вырăнти ял хуçалăх кооперативĕн председательне пĕтĕмпе 1,2 млн ытла тăваткал метр йышăнакан 6 çĕр лаптăкне панă. Çав лаптăксем, Катькас ял тăрăхĕн территорийĕнче вырнаçнăскерсем, патшалăх харпăрлăхĕнче, район администрацийĕ тытса пымаллискерсем пулнă. Саккуна пăснă май муниципалитетсен бюджечĕсене пĕтĕмпе 11,6 млн ытла тенкĕлĕх сиен кӳнĕ.

Хальхи вăхăтра уголовлă ĕçсене пĕр производствăна пĕрлештернĕ, следстви пырать.

**К.НИКОЛАЕВ.**

## Паллă пулăма халалланă

***Муркашри тĕп библиотекăра «Раççейри Культура çулталăкĕ» курав йĕркеленĕ. Вăл тăватă уйрăмран тăрать. «Вырăс культури» ятли вырăс культурин историйĕпе, этемлĕх историйĕпе культурăн çыхăнăвĕпе паллаштарать. «Чăваш культурин тĕнчи» уйрăм куракана чăваш халăхĕн историйĕ, культури, йăли-йĕрки, искусстви, тĕрри пирки анлăн пĕлтерет.***

Муркаш районĕн историйĕ, йăли-йĕрки тата культури йăлтах – «Муркаш районĕ: истори тата культура» уйрăмра. «Культурăра вулавăшсем уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Университет-институте культурăн ытти учрежденийĕ пулмасан та, анчах библиотека пур тăк – çакăн пек çĕр-шывра культура вилмест», – палăртнă хăй вăхăтĕнче Д.С.Лихачев паллă ăсчах. Çак каларăша Л.Николаевăн, Н.Савельевăн, В.Алексеевăн кĕнекисем çирĕплетеççĕ. Вĕсем «Халăх ăс-хакăлĕн çăл куçĕ» уйрăмра вырăн тупнă.

**Р.ИВАНОВА.**

## Куравра _ Ленинград

***ЧР Наци библиотекинче 1944 çулта Ленинграда тăшмансенчен хăтарнăранпа 70 çул çитнине халалласа кĕнекесемпе ӳкерчĕксен куравĕ уçăлнă.***

Ленинград блокади – Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çулĕсенчи чи йывăр тапхăр. 900 кун хула çыннисем выçăллă-тутăллă пурăнса та парăнман. Совет Çарĕ кăрлачăн 27-мĕшĕнче нимĕç салтакĕсене аркатнă хыççăн ирĕке тухнă. Çăмăл мар çак вăхăта сăнлакан кĕнекесемпе тата ӳкерчĕксемпе паллаштарать те курав. А.Буровăн «Блокада: кунран кун», И.Мощанскин «Ленинград патĕнче» тата ытти кăларăм халăхăн паттăрлăхĕпе чăтăмлăхне кăтартаççĕ. Куравра паллă çыравçăсен Нева çинчи хулана халалланă хайлавĕ те чылай. Уйрăмах Ольга Берггольц сăввисем вулакансен чунне тыткăнлаççĕ. Вăл хăйĕн хайлавĕсене радиопа вуласа Ленинградра пурăнакансене пурăнма хавхалантарнă. Çавăн пекех куравра – А.Пахомов, В.Серов, Б.Угаров тата ытти паллă художниксен йывăр çав тапхăра сăнлакан картинисем.

**А.МИХЕЕВ.**

## Олимпиада умĕн

***Сочире нарăсăн 7-мĕшĕнче пуçланакан хĕллехи Олимп вăййисене халалласа Çĕмĕрле хулинче «Хăвăртрах, çӳллĕрех, вăйлăрах!» акци иртнĕ.***

Мероприятие шкулачисемпе учительсем хутшăннă, уйрăмах 8-мĕш гимнази вĕренекенĕсем хастар пулнă. Акци вăхăтĕнче вĕсем хула тăрăх çӳресе çынсене хăйсем ăсталанă илемлĕ тĕрлĕ япала, Олимп вăййисен символикиллĕ капăр теттесем, саламлă çырусем парнеленĕ. Ентешĕсене тĕнче шайĕнчи пысăк пулăмран айккинче юлмалла маррине аса илтернĕ, ăмăртусене сăнама тата спортсменсемшĕн «чирлеме» сĕннĕ. Çĕмĕрлесем çамрăк волонтерсене ырă ĕçшĕн тав тунă.

**А.МИХАЙЛОВ.**

## «Раштав çăлтăрĕ»

***Çак ятпа Чăваш патшалăх культурăпа искусство институтĕнче Чăваш Енри вырсарни шкулĕсен фестивалĕ иртнĕ.***

«Раштав» ыр кăмăллăх фончĕ йĕркеленĕ уява Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар хулисенчен, Çĕмĕрле, Вăрнар, Вăрмар, Хĕрлĕ Чутай тăрăхĕсенчен 455 çамрăк артистпа 16 коллектив хутшăннă. Вĕсене ЧР Ачасен прависене хӳтĕлекен уполномоченнăй Вячеслав Рафинов тата пачăшкăсем саламланă. Йăлана кĕнĕ пекех фестивальте вырсарни шкулĕсене çӳрекен ачасем куракансене пĕчĕк спектакльсемпе савăнтарнă. Çавăн пекех культура институчĕн студенчĕсен хорĕ илемлĕ юрăсем шăрантарнă, хулари гимназисемпе шкулсенчи православи класĕсенче вĕренекенсемпе ача садне çӳрекенсем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарнă.

**О.МАСЛОВ.**





Паян улшăнса тăракан пĕлĕтлĕ çанталăк пулать, юр çукалать. Çил çурçĕр-хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 8, каçхине 13 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 746 мм, сывлăшри нӳрĕк 87 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 32 минут.**

Ыран пĕлĕтлĕ çанталăк пулать. Çил хĕвел анăçĕнчен çеккунтра 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 15, каçхине 18 градус сивĕ.** Атмосфера пусăмĕ 755 мм, сывлăшри нӳрĕк 82 процент.

**Кун тăршшĕ 7 сехет те 35 минут.**

ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# КУЛЬТУРА ВУЧАХĔ ЯЛАН ХĔМЛЕНТĔР

**2014 çул – Культура çулталăкĕ – пуçланчĕ. Обществăна культура аталанăвĕн ыйтăвĕсене татса пама явăçтарас, историпе культура еткерлĕхне упраса хăварас, Раççей культурин сумне тĕнче шайне çĕклес тĕллевпе пуçарнă юхăм çĕр-шыв, республика пурнăçне ырă енне улăштарасси иккĕлентермест.**

**Çулталăк тăршшĕнче пурнăçламалли ĕçсен калăпăшĕ пысăк. Паллă кунсене, юбилейсене халалланă мероприятисем йăлана кĕнĕ йĕркепе иртĕç. Библиотекăсем, музейсем, театрсем тулли хăватпа ĕçлĕç. Вĕсем Чăваш Республикин культура пурнăçне самай пуянлатĕç. Çак тата ытти ĕç-хĕл хушшинче культура учрежденийĕсен пурлăхпа техника никĕсне вăйлатасси, вĕсем кӳрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхне ӳстерме майсем туса парасси тĕпре пуласси çинчен каланăччĕ культура министрĕ. Кăçал, сăмахран, оперăпа балет театрне, филармоние юсаса çĕнетме йышăннă.**

**Шел те, республикăри ялсенчи клубсен шăпи питех те хурлăхлă. Вĕсен пысăк пайне çур ĕмĕр каяллах уçнă. Кирек мĕнле япала та вăхăт иртнĕ май япăхать, юхăнать. Чылайăшне вара ку таранччен тĕпрен мар, çиелтен те пулин пĕрре те юсаман. Нухрат çитменни ура хурать. Тĕпрен илсен, хальхи вăхăтра клубсем унта ĕçлекенсен ыр кăмăллăхĕ çинче тытăнса тăраççĕ. Мачча шăтнă-и, урай кашти хуçăлнă-и, чӳрече çĕмĕрĕлнĕ-и – никама та кĕтсе лармалли çук. Хăмине те, пăтине те, ыттине те хăйсенех тупмалла. Хаçат-журнал та çырăнса илеймеççĕ. «Вăл пулмасан пирĕн клуб тахçанах хупăнĕччĕ», – пултаруллă специалистсем пирки çапла каланине пĕрре мар илтнĕ. Ялсенче çавăн пек ĕçченсем пурри савăнтарать. Аптăраманнисем, клуб ĕçĕшĕн чунне пама хатĕррисем майне тупаççĕ: е спонсорсене явăçтараççĕ, е тĕрлĕ грант çĕнсе илеççĕ...**

**Пĕлтĕр, сăмахран, ЧР Президенчĕн ялти культура учрежденийĕсене аталантармалли мерăсем çинчен калакан хушăвĕпе килĕшӳллĕн пуçарнă программăна лекме пултарнă 18 культурăпа кану центрĕ пурлăх никĕсне /çутă хатĕрĕсем, компьютер техники, ытти оборудовани, тумсем.../ пуянлатнă. Ултă çул ытла ĕçлекен çак проект культура учрежденийĕсене çĕнелме самай пулăшать.**

**«Клуб – культура вучахĕ» тетчĕç. Çак каларăшăн пĕлтерĕшĕ ӳлĕмрен те сумне ан çухаттăрччĕ. Унта усăллă канма май пултăрччĕ. Пĕчĕк ялсенче клубсем уйрăмах хисепре. Çамрăксене çеç мар, аслăрах ӳсĕмрисене те илĕртет вăл. Ватăсем пĕрле пухăнса иртнине аса илеççĕ, хальхине сӳтсе яваççĕ, малашлăх пирки шухăшлаççĕ... Шел те, пурте республикăра тухса тăракан мĕн пур хаçат-журнала çырăнса илеймест. Кӳршĕ-аршă пĕр-пĕринпе килĕшсе татăлнă пек пĕри – пĕрне, тепри теприне çырăнать, вара клуба илсе пырса ыттисене паллаштарать е улăштарать. Пĕчĕк ялсенче тем тесен те çынсем пĕр-пĕрне çывăхрах, туслăрах пурăнаççĕ. Савăнăçне те, хуйхи-суйхине те пĕрле пайлаççĕ темелле.**

**Нумай çĕрте пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем арканчĕç. Чылай ялта шкул, больница, ытти учреждени хупăнчĕ. Çынсене тĕл пулса калаçмалли, хутшăнмалли вырăнсем сахалланчĕç. Çавăнпах-тăр ялйыш пĕр-пĕринчен ютшăнса, сивĕнсе пырать. Çакă уйрăмах пысăк ялсенче вăйлă сисĕнет. Клубсем халăха пухакан, пĕтĕçтерекен вырăн шутланнă. Малашне те çак ĕç-хĕле туллин пурнăçлама пултарччăр вĕсем.**

**Пуррине сыхласа хăварма та май тупасчĕ. «Пирĕн ялта клуб тата пĕчĕк лавкка çеç тăрса юлчĕ, – тенĕччĕ Канаш районĕнчи Пратьякас Енĕш ялĕнчи пенсионер. – Ăна та хупасшăн. Çурчĕ кивĕ паллах. Пирĕн аттесем вăрçă хыççăн тунăскерех. Шухăшлатăп та – чĕрем хĕссе ыратса каять. Вăрçă хыççăнхи йывăр çулсенче культура учрежденийĕсем уçассишĕн тăрăшнă. Паян вара? Пирĕн яла уйăхра пĕрре медицина ĕçченĕ халăх сывлăхне тĕрĕслеме килет. Чирлисене вăл клубри пĕр пӳлĕмре йышăнатчĕ. Культура çуртне хупсан лавккара е урамра лармалла пулать-ши унăн?»**

**Пратьякас Енĕшре – утмăл ытла хуçалăх. Юлашки вăхăтра тĕрлĕ хуларан ашшĕ-амăшĕн тăван килне куçса килекен те йышланнă иккен. Çуллахи вăхăтра кукашшĕ-кукамăшĕ, аслашшĕ-асламăшĕ патне ача-пăча, хĕр-упраçпа яшкĕрĕм пухăнать. Çавăнпах культура ĕç-хĕлĕн пĕлтерĕшне чухлакан, ĕмĕрне халăх театрĕнче выляса ирттернĕ ватă çынна ялти клуба епле майпа сыхласа хăварасси вăйлах шухăшлаттарать. Çак ыйтупа таçта та çитнĕ. Çурта юсама та, ыттине тума та хатĕр вăл.**

**Ял халăхне культура çурчĕ е клуб кирли куç кĕрет. Халăх çӳлтен пăрахса парасса кĕтни ырлăх кӳрес çуккине ăнланнăран ĕмĕт-тĕллевне чылай чухне хăйĕн вăйĕпе пурнăçа кĕртме ăнтăлать. Акă Элĕк районĕнчи кинемей пуçарăвĕ питĕ тĕлĕнтернĕччĕ. Кивĕ çурта юсаса çĕнетсе клуб уçассишĕн банкран кивçен илме те шикленмен вăл. Çакна тӳрре кăларакан сăлтавĕ пулнă-ха ĕнтĕ: ашшĕ-амăшĕн çуртне юхăнтарни никама та сăвап тумĕ. Анчах вăл унпа урăх тĕллевпе усă курманни, халăх валли клуб уçни ăна мухтама хистет. Шупашкар районĕнчи Атăльялта та çакăн йышши тĕслĕх пулнăччĕ. Ялсенче çакăн пек пуçаруллă çынсем пурри чăннипех те мăнаçлантарать.**

**Патшалăх ялсенчи культура учрежденийĕсен çивĕч ыйтăвĕсене мала кăларни питех те аван. Анчах пур çĕрте те пĕр харăс йĕрке тăваймăн. Черетпе, майĕпен-майĕпен... Шанас килет. Чи малтан тĕп ялсенчи культурăпа кану центрĕсене юсаса çĕнетме палăртаççĕ, унтан, тен, пĕчĕк ялсенчисем патне те черет çитĕ. Пуррине упраса хăварасчĕ. Вĕсен тивлечĕпе çĕр пичĕ çинчен ялсене çухалма парас марччĕ.**

**Валентина БАГАДЕРОВА**

Ҫыру йӗрӗпе

# Ҫурӑк валашка умӗнче...

**«Хыпар» редакцине пӗлтӗр раштав уйӑхӗнче Етӗрне районӗнчи Кӗҫӗн Тӳмерле ялӗнче пурӑнакансенчен ҫыру килчӗ**

*«Патшалӑх хӑй вӑхӑтӗнче килти хуҫалӑха аталантарма ял халӑхне 2,4-шар гектар ҫӗр пачӗ. Кӗҫӗн Тӳмерле ҫыннисене те уйӑрчӗ. Пирӗн лаптӑксем – Мускав-Хусан автоҫул хӗрринче. Уй урлӑ нефть, газ, солярка пӑрӑхӗсем иртеҫҫӗ. Кӑҫал вӗсенчен пӗрне ҫӗр айӗнчен экскаваторпа чавса кӑларчӗҫ, тӑприне икӗ енне купаларӗҫ – пирӗн пайсене ҫӗмӗрсе юрӑхсӑра кӑларчӗҫ. Усӑ курнӑран вӑхӑчӗ тухнӑ пӑрӑха улӑштарса темиҫе районти чылай пайҫӑ ҫӗрне пӑснӑ. Нефть компанийӗ ӗҫ пуҫличчен вӗсемпе икӗ енлӗ килӗшӳ ҫирӗплетнӗ, ҫынсене кӳнӗ тӑкака пӗтӗмпех саплаштарнӑ. Укҫи сахал мар. Тӗрлӗ майпа усӑ курса ӑна алла илес текен пайтах иккен. Вӗсенчен пӗри – Етӗрне районӗнчи «Юވановское» общество директорӗ Н.И.Федоров. Вӑл пирӗнпе, лаптӑксен харпӑрлӑхҫисемпе, тӗл пулса калаҫмасӑрах пӑрӑх иртекен уя ватнӑ пирки тӳснӗ тӑкака саплаштарма ыйтса «Средне-Волжский Транснефтепродукт» акционер обществипе /вӑл Хусанта вырнаҫнӑ/ килӗшӳ ҫирӗплетнӗ. Ҫав предприяти Федорова миллион тенкӗ ытла тӳленӗ. Пире, пай хуҫисене, пӗр пус та памарӗҫ. Утӑ та ҫулса илеймерӗмӗр.*

*Пирӗн шаннӑ ҫын, Кӗҫӗн Тӳмерлере пурӑнакан Римма Лукина, Федоров пире шӑнман пӑр ҫине лартса хӑварнине 2013 ҫулхи ҫу уйӑхӗнче Шалти ӗҫсен министерствин Етӗрне районӗнчи полици пайне пӗлтерчӗ. Федоров саккуна пӑснине ҫирӗплетекен тӗслӗх тупса палӑртаймарӑмӑр тесе хыпарларӗ пире полици сотрудникӗ. Район тата республика прокурорӗсем, районти полици пайӗн пуҫлӑхӗ патне киревсӗрлӗх ҫинчен ҫыру ятӑмӑр. Хальлӗхе Федоров тӗлӗшпе уголовлӑ ӗҫ пуҫарман, Хусанти обществӑна улталаса укҫа илнӗшӗн ӑна айӑпламан, лаптӑк хуҫисене тӳлемен. Юлашки шанӑҫ – хаҫатра. Ӗҫ кӑларма «Хыпар» пулӑшасса шанатпӑр.*

***Р.Г.Лукина, З.А.Шашкова, С.С.Зубайкин, М.Г.Маслова, Л.А.Родионова, Л.Г.Кудряшова...»***

Ҫыру айне 13 ҫын алӑ пуснӑ.

Техника хатӗрӗ уя ҫитиччен вӗсем пайсене регистраци палатинче шута илтернӗ, лаптӑксен харпӑрлӑхҫи пулнине ҫирӗплетекен свидетельствӑсем илнӗ. Хусанти нефть предприятийӗн «Юവановское» обществӑпа мар, ҫак хуҫасемпе килӗшӳ тумалла пулман-ши? Миллион тенке мӗншӗн ял хуҫалӑх организацийӗн счечӗ ҫине куҫарса панӑ-ха? Ыйтусен хуравне пӗлес тӗллевпе Кӗҫӗн Тӳмерлене ҫул тытрӑмӑр. Пире Зубайкинсен ҫуртӗнче ҫыру авторӗсен ушкӑнӗ кӗтсе илчӗ, пайҫӑсем «Юვановское» ертӳҫи Н.И.Федоров ҫӗр хуҫисене чике тӑршшӗ лартни ҫинчен тарӑхса каласа пачӗҫ.

**Римма ЛУКИНА, пайхуҫисен шаннӑ ҫынни:** Пирӗн лаптӑксем /48 гектар/ – Кӗҫӗн Тӳмерле ҫумӗнче. Вӗсене уйӑрса кӑларса чикӗлемен. Малтан пирӗн ҫӗрпе «Трудовик» колхоз усӑ курнӑ. Каярахпа вӑл пирӗн лаптӑксене Узбекистанран килнӗ усламҫӑсене тара панӑ. Часах кусем те пӑрахса кайрӗҫ. Вара пайсене кашнин харпӑрлӑхне илме тӗллев тытрӑмӑр. Ҫӗр документсене тутарса регистраци палатине тӑратрӑмӑр. 2012 ҫулта вӗсене пӑхса тухрӗҫ те 24 лаптӑк хуҫин харпӑрлӑх правине палӑртрӗҫ. Ӑна ҫирӗплетекен документсем пачӗҫ. 2013 ҫулта ҫӗре сухаласа акма палӑртрӑмӑр. Дизтопливо, тракторист валли пайҫӑсенчен укҫа пухрӑмӑр. Анчах ӗмӗте татрӗҫ. Уя тухрӑмӑр та экскаватор ик-виҫ метр тарӑнӑшӗнчен тӑм кӑларнине куртӑмӑр.

**Мария ЗУБАЙКИНА:** Автоҫул леш енче – пирӗн 4 пай. Вӗсене регистрацилеттерсе темиҫе пин тенкӗ тӑкаклантӑмӑр. Экскаваторсем, йывӑр тиевлӗ машинӑсем лаптӑка пӗр шелсӗр ватрӗҫ, хытарчӗҫ. Йӗпесапара ҫӑрса пӗтерчӗҫ. Вьртса макӑрас килчӗ. Пӑрӑха улӑштарнӑ хыҫҫӑн ҫӗре тикӗслерӗҫ пулин те пусӑрантарман пирки канав путсах пырать. Ҫуркунне бульдозер тытма, кӗсьерен кӗмӗл каллех кӑларма тивет. Пай хуҫисемшӗн урӑххисем укҫа илни питӗ тарӑхтарать.

**Зоя ШАШКОВА:** Ҫулла экскаваторсем ӗҫленине пӑхса тӑтӑм. Ҫӗре алтса виҫӗ метр тарӑнӑшӗнчен пӑрӑх кӑларчӗҫ. Хура тӑприне – пӗр енне, тӑмне тепӗр енне купаларӗҫ. Пайҫӑсенчен пӗри Вера Кольцова ҫу уйӑхӗнче Хусанти «Средне-Волжский Транснефтепродукт» акционер обществипе телефонпа ҫыхӑннӑ, пирӗн лаптӑксене техника кӗртсе тӑкак кӳнӗшӗн Николай Федоров темиҫе ҫӗр пин тенкӗ илнине пӗлнӗ. Пирӗн шаннӑ ҫын Римма Лукина Николай Ивановичпа тӗл пулса калаҫма тӑрӑшрӗ. Ӑна ҫӑвӗпех шырарӗ, ун патне кулленех телефонпа шӑнкӑравларӗ. Анчах лешӗ тӗл пулма килӗшмерӗ, Риммӑран пӑрӑнса ҫӳрерӗ.

**Римма ЛУКИНА:** Эпӗ Николай Ивановича лайӑх пӗлетӗп. Вӑл – Етӗрне районӗнчи Вӑрманкасран, манӑн атте те ҫак ялтан. Ку пӑтӑрмахчен унпа тӗл пулнӑ чух сывлӑх сунмасӑр нихҫан та иртмен. Кӑҫал манран тарса ҫӳресе вӑйлах тарӑхтарчӗ. Аптраса ҫитнипе вырма вӑхӑтӗнче шӑллӗпе, Олег Ивановичпа, курса калаҫрӑм. Вӑл, «Ювановское» ертӳҫисенчен пӗри пулнӑ май, пиччӗшӗ пирӗнпе курса калаҫмасӑрах Хусанти обществӑпа килӗшӳ тунине аван пӗлнӗ. Анчах пайсене сарӑпланӑшӑн укҫа килессине пире систермен. Ҫакӑншӑн ӑна куҫранах тӗксе каларӑм. Вӑл намӑсланса автомашинӑна кӗрсе ларчӗ те куҫран ҫухалчӗ. Унтанпа манран пӑрӑнса ҫӳрет.

**Любовь КУДРЯШОВА:** Николай Федоров пирӗн пайсемшӗн кӗмӗл илнине пӗлсен питӗ кулянтӑмӑр. Мӑшкӑла чӑтайманнипе право йӗркине сыхлакан органсене, районтан пуҫласа Мускава ҫитиех, пулӑшу ыйтса ҫырусем ятӑмӑр. Шел те, пирӗн хута кӗрекен тупӑнмарӗ.

Нефть компанийӗ тӑкакшӑн саплаштармалли кӗмӗле мӗншӗн «Ювановское» обществӑна тӳленӗха? Ыйту хуравне шыраса Кӗҫӗн Тӳмерле ял тӑрӑхӗн администрацине ҫитрӗмӗр. Пире пуҫлӑх ҫумӗ София Сергеева кӗтсе илчӗ.

«Кӗҫӗн Тӳмерлери ҫирӗм тӑватӑ ҫемьене шӑнман пӑр ҫине лартса хӑварни пире те, администраци специалисчӗсене, питӗ тӗлӗнтерчӗ, – терӗ вӑл. – Ҫав вӑхӑтрах ялти ытти пайҫӑ тӑкака саплаштарма Хусантан укҫа илчӗ. Тӗслӗхрен, пайҫӑсен Зоя Терентьевӑпа Альбина Ишалеевӑна шаннӑ ушкӑнӗсем. Пӗрремӗшӗн – 38, иккӗмӗшӗн 36 гектар. Ял тӑрӑхӗн фондӗнчи ҫӗрӗн пӑрӑх хывнӑ лаптӑкӗ те /1,4 гектар/ тӑкак тӳсрӗ. «Средне-Волжский Транснефтепродукт» уншӑн та пӗтӗмпех саплаштарчӗ. Мӗншӗн икӗ тӗрлӗ пулса тухнӑ? Ахӑртнех, сӑлтавне Шупашкарти «Раҫҫей» хӑна ҫуртӗнче вырнаҫнӑ «Аршин» обществӑра тупнӑ килӗшӳпе ҫыхӑнтармалла».

Сӑмах мӗн пирки пырать-ха? «Ювановское» директорӗ Н.Федоров ҫирӗплетнӗ тӑрӑх – инкеке лекнисен шаннӑ ҫынни Р.Лукина 2013 ҫулхи нарӑс уйӑхӗн 25-мӗшӗнче 24 пай ҫӗрне хайхи обществӑна ял хуҫалӑх культурисем ҫитӗнтерме тара панӑ имӗш. Римма Германовна ҫакна ӗнентерекен килӗшӗвӗн пӗр экземплярне пире те пачӗ. Н.Федоров кашни пайшӑн хуҫисене 200 килограмран сахал мар тырӑ тӳлевсӗрех уйӑрма шантарнӑ.

«Эпӗ Николай Ивановичпа килӗшӳ тӑвасси пирки тӗл пулса калаҫман, килӗшӳ хучӗ ҫине алӑ пусман. Вӑл Хусана ярса панӑ хут ҫине эпӗ алӑ пуснӑ пек кӑтартнӑ. Ку – ултав. Манӑн хушамат тӗлне такам ручкӑпа чӗркелесе хуни эпӗ алӑ пуснипе пач тӳр килмест. Суя килӗшӗвӗн пӗр экземплярне пире те тупса пачӗҫ. Ӑна прокуратурӑна та, полици уйрӑмне те патӑмӑр, экспертизӑна яма ыйтрӑмӑр. Пӗри те мана куҫран эсӗ алӑ пуснӑ, аллу санӑн тесе каламан».

Ҫак документа ӗненсен «Ювановское» – 2013 ҫулхи нарӑс уйӑхӗнчен ҫыру авторӗсен харпӑрлӑхӗнчи пайсен арендаторӗ. Кӗскен каласан – вӗсен вӑхӑтлӑх хуҫи. 48 гектар лаптӑкра ял хуҫалӑх культурисем ҫитӗнтерме хатӗрленнӗ, ӑна ҫӗр ҫаврӑнӑшӗсем ҫинчен калакан саккунпа килӗшӳллӗн тирпейлӗн пӑхса тӑма хӑй ҫине явап илнӗ имӗш. Н.Федоров ял тӑрӑхне пӑрӑх улӑштаракансем киличченех тутарсемпе килӗшӳ тума васканӑ.

Хӑйӗнпе е шӑллӗпе курнӑҫасшӑнччӗ. Олег Федоров, Ювановское» обществӑн ертӳҫисенчен пӗри, телефон кӗпҫине илчӗ пулин те – тӗл пулма килӗшмерӗ. Пиччӗшне вара Етӗрне районӗнче е Шупашкарта тӑр кӑнтӑрла хунарпа шырасан та тупаймастӑн.

Хусансем патне те ыйту пур. «Средне-Волжский Транснефтепродукт» гендиректорӗ Рафис Купкенов укҫа пайличчен Кӗҫӗн Тӳмерле таврашне килсе курнӑ. Тӗл пулура Олег Федоров та пулнӑ. Пайҫӑсем унӑн умӗнчех тӳснӗ тӑкакшӑн саплаштаракан укҫана «Ювановское» обществӑна ан куҫарӑр, эпир хамӑрӑн пайсене хуҫалӑха тара паман тенӗ. «Юрӗ, вырӑнти обществӑна куҫармӑпӑр», – килӗшнӗ Купкенов. Анчах сӑмахне тытман. Нухрат темшӗн «Ювановское» кассинех пырса кӗнӗ.

Николай Иванович янтӑ укҫана чылай маларах, ҫулталӑк пуҫламӑшӗнчех, кӗсьене чикме ӗмӗтленни уҫӑмланчӗ. Федоровсем инкек тӳснӗ Вера Кольцова килне нарӑс уйӑхӗнче ҫитнӗ, пая тара пама ыйтнӑ. Ӑна харпӑрлӑха илнӗскер, ӳлӗм хӑйӗн вӑйӗпе сухаласа акма палӑртнӑскер, арендӑна пама килӗшмен. Пӑрӑха улӑштаракан предприяти канав чавса Етӗрне тӑрӑхне ҫывхарса пынине районта 2012 ҫултах пӗлнӗ. Ҫурӑк валашка умӗнче тӑрса юлнӑ Кӗҫӗн Тӳмерлесене ултав пирки суда тавӑҫ тӑратма сӗнтӗмӗр. Халӗ ӑна хатӗрлеме ваккат шыраҫҫӗ. «Ӗҫе судра пӑхса тухмасӑр та тӗрӗслӗхшӗн кӗрешме чарӑнмастпӑр», – терӗ Р.Лукина.

Ыйтусен хуравне шыраса Пушкӑрт ял тӑрӑхӗнче те пултӑмӑр, «Ювановское» общество ӗҫ-хӗлӗпе паллашасшӑнччӗ. Шел, алӑкӗ ҫинче пысӑк ҫӑра ҫакӑнса тӑрать. Бухгалтерӗпе те тӗл пулаймарӑмӑр. Пушкӑртри ӗҫ ветеранӗсем каланӑ тӑрӑх – икӗ хуҫалӑхӑн вун-вун миллион тенкӗ тӑнӑ пурлӑхне туяннӑ «Ювановское» паян панкрута тухас патнех ҫитнӗ, совет тапхӑрӗнче пухнӑ пурлӑха салатать. Иртнӗ ӗмӗрте ҫӗр-ҫӗр ӗне выльӑх, сысна усранӑ, халӗ витере сӑвакан 40 ытла ӗне ҫеҫ. Предприятире вӑй хуракансен ӗҫ укҫи пӗчӗк, ӑна юлашки хут хӑҫан илнине ас тумаҫҫӗ. «Тен, ҫулталӑк вӗҫленнӗ ятпа кӑштах та пулин парӗҫ?» – сӑмах хушрӗ лавкка умӗнче пирус мӑкӑрлантаракан механизатор. Федоровсен ӗҫ кӑтартӑвӗсем савӑнтармаҫҫӗ. Ҫывӑх вӑхӑтра пайҫӑсем вӗсемпе сутлашма хатӗрленеҫҫӗ.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ, Валентин ГРИГОРЬЕВ**

Кун йӗркинче

# Коммуналлӑ пулӑшу хакланать-и?

***"Хыпар" ыйтӑвӗсене Чӑваш Республикин конкуренци политикин тата тарифсен енӗпе ӗҫлекен патшалӑх службин ертӳҫи Альбина ЕГОРОВА хуравлать.***

**– Пурӑнмалли ҫурта пӑхса тӑрассипе, коммуналлӑ пулӑшупа ҫыхӑннӑ хаксем тӗлӗшпе пӗлтӗр кӑларнӑ йышӑнусенчен хӑшне уйӑрса палӑртатӑр?**

– Патшалӑх службин тарифсене улшӑну кӗртесси пирки – 321, вӑл шутра ҫурта газ, ҫӗр кӑмрӑкӗ, мазут ҫунтарса ӑшӑтассипе – 91, ӑна вӗри шыв парса тӑрассипе – 26, сивӗ шывпа тивӗҫтерессипе тата шӗвӗ каяша ҫуртран юхтарса кӑларассипе – 132, йӑлари хытӑ каяша сиенсӗрлетессипе – 12, объекта электричество ҫитерессипе – 40, вӗсене кирлӗ тӗрлӗ ҫыхӑну йӗркелессипе – 18, продукци сутнӑ чух хушма хак лартассипе 2 йышӑну кӑларнӑ, – терӗ Альбина Егоровна. – Тарифсене йӗркелесе тӑнӑ пирки курнӑ экономика пайталӑхӗ /эффекчӗ/ – 2,6 млрд тенкӗлӗх. Ку – 2012 ҫулхинчен 23,8% нумайрах.

Ҫуртра пурӑнакансен хваттер тулашӗнчи пӗрлехи пулӑшу ӗҫӗсен нормативне пысӑклатнӑ пирки 2013 ҫул пуҫламӑшӗнче ҫынсем ҫӑхав нумай ҫырчӗҫ. Раҫҫей Правительствин 2013 ҫулхи ака уйӑхӗн 16-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗпе килӗшӳллӗн республика ҫуртра пурӑнакансем хваттер тулашӗнче усӑ куракан сивӗ тата вӗри шыв нормативне пӑхса тухса пӗчӗклетрӗ. Ҫуртран, унӑн тулашӗнче юхтаракан шӗвӗ каяшшӑн тӳлеттермеллине пачах пӑрахӑҫларӑмӑр.

Ҫапла вара нормативсем самаях пӗчӗкленчӗҫ – ҫынсем коммуналлӑ пулӑшушӑн сахалрах тӳлерӗҫ. Ҫапах та ҫӗнӗ нормативсемпе килӗшӳллӗн утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен 18 муниципалитет йӗркеленӗвӗнчи пӗрлехи газ хуранӗпе ӑшӑтакан ҫуртсенче пурӑнакансен тарифӗ иккӗмӗш ҫур ҫулта республика нормативӗсен мӗн пур ӳсӗмӗ 12%-ран та пысӑкрах пуласси палӑрчӗ. Ҫавна шута илсе ҫуртсене микрорайонти пӗрлехи газ хуранӗпе ӑшӑтакан 12 организацишӗн тарифсене пӗчӗклетрӗмӗр. Вӗсене Раҫҫей Тарифсен службипе килӗштертӗмӗр. Нормативсене катнӑ пирки ҫав организацисем малтан палӑртнӑ чухлӗ тупӑш илейменни палӑрчӗ. Тӑкака саплаштармашкӑн республика хыснинчен вӗсене 1,8 млн тенкӗ уйӑрма пӑхнӑ.

**– 2014 ҫулта коммуналлӑ пулӑшу тарифӗсене мӗнле йӗркепе ӳстерӗҫ?**

– Федерацин Тарифсен служби кашни регионта ҫурта газпа ӑшӑтассипе, хваттере сивӗ тата вӗри шывпа тивӗҫтерессипе, ҫуртран шӗвӗ каяш юхтарса кӑларассипе тарифсем кӑҫал мӗн чухлӗ нумайрах пысӑкланассине палӑртрӗ. Вӗсем пӗрремӗш ҫур ҫулта пӗлтӗрхи иккӗмӗш ҫур ҫулхи шайрах юлӗҫ.

Кӑҫалхи утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен ҫурта газпа ӑшӑтакан организацисем тивӗҫтерекен ӑшӑ энергийӗн /хӑвачӗн/ тарифӗсем республикӑра чи нумай вӑтамран – 5,2%, ҫурта сивӗ тата вӗри шывпа тивӗҫтерессипе, хваттерсенчен шӗвек каяш юхтарса кӑларассипе 4,7% ӳсӗҫ. Федерацин Тарифсен служби кӑҫалхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗнчен регионсенче, ҫав шутра республикӑра пурӑнакансем, вӗсемпе танлаштарнӑ потребительсем валли электроэнерги тарифӗсен чи пысӑк тата чи пӗчӗк шайне палӑртрӗ. Федерацин социаллӑ пурнӑҫӗпе экономика аталанӑвӗн кӑҫалхи тата ҫитес ҫулсенчи пуласлӑх тӗллевӗпе килӗшӳллӗн ҫут ҫанталӑк газӗпе электричество кӑҫалхи утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен иртнӗ ҫулхи раштав уйӑхӗнчипе танлаштарсан 4,2% хакланӗҫ. Вӗсен хакӗ пӗрремӗш ҫур ҫулта хӑпармӗ, утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен ӳсӗ.

**– Пассажирсене илсе ҫӳрекен автотранспорт предприятийӗсен тарифӗсем пысӑкланӗҫ-и?**

– Пӗлтӗр общество транспорчӗн тарифӗсене пуҫласа уйӑрса пайӑррӑн ҫирӗплетнӗ. Нумай вӑхӑтлӑх билет хулара пӗр тенкӗ хакланчӗ, унӑн таврашӗнне ҫӳрекен автотранспортра хакланмарӗ. Автомобиль тата хулари электричество транспорчӗн билет хакӗ кӑҫалхи кӑрлачӑн 1-мӗшӗнчен ӳсмерӗ.

**– Иртнӗ ҫул кулленхи пурнӑҫри пысӑк пӗлтерӗшлӗ, ятарлӑ йышӑнупа списока кӗртнӗ таварсен хушма хакӗ мӗнле улшӑнса тӑчӗ тата вӑл кӑҫал хакланӗ-и?**

– Вӗсен хакне хушса тата ӳстерсе хӑпартман. Сӑмахран, ҫын сывлӑхӗшӗн сӗре кирлӗ тата пысӑк пӗлтерӗшлӗ эмелсен, пепкесен ятарлӑ апачӗн, шкулта, техника училищинче, аслӑ вӗренӳ заведенийӗнче сутнӑ апат-ҫимӗҫӗн ваккӑн тата курттӑммӑн сутнӑ чухнехи хушма хакӗ пӗр шайрах юлнӑ. Кӑҫал та ӑна хушма, ӳстерме палӑртман.

**– Тарифсене йӗркелес тӗлӗшпе мӗнле улшӑнусем пулӗҫ?**

– Вӗсене регионсенче шайлаштарса тӑракан тытӑмсен умне ик тӗллев лартнӑ: пӗрремӗшӗ – тарифсене уҫҫӑн йӗркелесси; иккӗмӗшӗ – ҫак ӗҫ мӗнле пынипе тата ҫӗнӗ тарифсемпе халӑха вӑхӑтра паллаштарасси. Раҫҫей Правительстви ҫынсене хӳтӗлес тӗллевпе кӑҫал коммуналлӑ пулӑшу тӳлевӗсене инфляци хисепӗннен 30% пӗчӗкрех тума – вӗсене утӑ уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен вӑтамран 4,2%-ран ытла мар пысӑклатма йышӑннӑ. Ку – юлашки ҫулсенчи чи пӗчӗк ӳсӗм. Регионсен ӗҫ тӑвакан влаҫне тӳлевсене ҫирӗп тытса тӑма хушнӑ. Ҫапах та кашни субъектшӑн вӗсем тӗрлӗрен пулӗҫ. Пӗрисемшӗн 4,2%-ран кӑшт сахалрах, теприсемшӗн кӑльт ытларах ӳсӗҫ.

Ҫапла вара федераци Правительстви Чӑваш Енри тӳлевсене вӑтамран мӗн чухлӗ индексацилемеллине палӑртӗ. Республикӑн ӗҫ тӑвакан органӗ муниципалитет йӗркеленӗвӗсенче вӗсене Чӑваш Енӗн вӑтам ӳсӗмӗнчен 1,5 хутран ытла ӳстерме памасть. Район-хулан халӑх суйлакан органӗ ятарлӑ йышӑну кӑларсан ҫеҫ ҫакӑнтан нумайрах ӳстерме май пур. Ыйтӑва депутатсен Пухӑвӗпе килӗштермесен тӳлевсене 1,5 хута яхӑн ӳстерессине субсидисене пайӑррӑн уйӑрса, ҫӑмӑллӑхлӑ тарифсем ҫирӗплетсе, нормативсене улшӑну кӗртсе индексацилемелле.

**– Патшалӑх нушисем валли тавар туянасси мӗнле хаксемпе пулса пычӗ?**

Патшалӑх служби ку ӗҫе йӗркелес тӗллевпе 2010 ҫултанпа саккассем вырнаҫтарать. Тупӑшса ӗҫлесе продукци сутма-туянма май тӑвассишӗн, патшалӑх саккасӗсем тӑвас йӗркене аталантарассишӗн нумай ӗҫлет. Пӗлтӗр таварпа тивӗҫтерме, патшалӑх нушисем валли пулӑшу ӗҫӗ йӗркелеме 3220 хаклашу – 2012 ҫулхинчен 33% нумайрах – ирттерчӗ. 7,6 млрд тенкӗлӗх саккас – 2012 ҫулхинчен 6% ҫеҫ сахалрах – вырнаҫтарчӗ.

Тӳрӗ те ырӑ тупӑшу, саккассене пурнӑҫланӑ чух ӗҫе уҫҫӑн йӗркелени хысна укҫине перекетлеме май пачӗ. 2011 ҫулта – 246 млн, 2012 ҫулта 607 млн тенкӗ, 2013 ҫулта виҫӗм ҫулхинчен – 1,2, 2011 ҫулхинчен 3 хут ытларах перекетлерӗмӗр.



■ **Михаил СЕРЕГИН калаҫнӑ**

## Раҫҫейре, тӗнчере

### «Ылтӑн глобус» лауреачӗсем паллӑ

**«12 летрабства» тата «Афера по-американски» фильмсем «Ылтӑн глобус» преми лауреачӗсем пулса тӑнӑ. Ӑна Голливуд ҫумӗнче аккредитациленӗ Ют ҫӗр-шыв прессин пӗрлӗхӗ парать. Наградӑсен хуҫисен ячӗсене кӑрлачӑн 12-мӗшӗнче Лос-Анджелесра иртнӗ савӑнӑҫлӑ каҫра пӗлтернӗ.**

**Стив Маккуин режиссер ӳкернӗ «12 летрабства» чи лайӑх драма фильмӗ пулса тӑнӑ. Дэвид О.Расселӑн «Афера по-американски» картиничи лайӑх комеди ятне тивӗҫнине палӑртнӑ. Кунсӑр пуҫне «Ылтӑн глобуссене» Дженнифер Лоуренс, Эми Адамс, Леонардо ди Каприо актерсем илнӗ.**

### Предпринимателе Раҫҫее тавӑрма килӗшмен

**Камбоджа Раҫҫейре ултавлӑ ӗҫсем тунӑтесе айӑплакан Сергей Полонский предпринимателе Раҫҫей Федерацине каялла яма сӑлтавсем тупман. «Интерфакс» пӗлтернӗ тӑрӑх– кун пирки Полонскин адвокачӗ Александр Карабанов каланӑ. Предпринимателе ирӗке кӑларнӑ.**

**Камбоджа влаҫӗсем Полонские 2013 ҫул пуҫламӑшӗнче вырӑнти моряксем тӗлӗшпе хӗсӗрленӗшӗн айӑпласа тытса чарнӑ. Ака уйӑхӗн пуҫламӑшӗччен ӑна Камбоджа тӗрминче тытнӑ, ҫапах таинкек тӳснӗ моряксем хӑйсем ыйтса ҫырнисене каяллаилсен /маларах вӗсем пайтаҫӑран компенсаци илнӗ/ ӑна ниҫта та тухса каймасси ҫинчен алӑ пустарнӑ. Камбоджӑра Полонские хирӗҫ пуҫарнӑ ӗҫе хупни ҫинчен 2014 ҫул пуҫламӑшӗнче кӑна пӗлтернӗ.**

**Ҫӗртме уйӑхӗнче Раҫҫей Полонские «Кутузовская миля» пурӑнмалли ҫурт-йӗр комплексне пая кӗнисенчен 6 млрд яхӑн тенкӗ вӑрланӑ май пуҫарнӑ ӗҫ тӑрӑх пӗтӗм тӗнчери шырава панӑ. Чӳк уйӑхӗн 11-мӗшӗнче Раҫҫей сучӗ куҫӑн мар майпа арестленӗ Полонские Камбоджӑра вырӑнтитӗрмене хупнӑ.**

Lenta.ru


*Чӑваш Республикин САККУНӖ*

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН «СУНАР ӖҪӖ ТАТА СУНАР РЕСУРСӖСЕНЕ УПРАСА ХӐВАРАССИ ҪИНЧЕН» САККУННЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН**

*Чӑваш Республикин САККУНӖ*

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛӐХ ХАРПӐРЛӐХӖНЧИ Е МУНИЦИПАЛИТЕТ ХАРПӐРЛӐХӖНЧИ ҪӖРСЕН ШУТӖНЧИ ҪӖР ЛАПТӐКӖСЕНЕ ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛӐХ НУШИСЕМ Е МУНИЦИПАЛИТЕТ НУШИСЕМ ВАЛЛИ ТУРТСА ИЛМЕЛЛИ, ҪАВ ШУТРА ТӲЛЕСЕ ИЛМЕЛЛИ ТӖСЛӖХСЕНЕ ПАЛӐРТАССИ ҪИНЧЕН**

*Чӑваш Республикин САККУНӖ*

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН «ВӐРМАНСЕНЕ СУТМАЛЛИ-ИЛМЕЛЛИ ДОГОВОРСЕН НИКӖСӖ ҪИНЧЕ ТӖШ ЙЫВӐҪ ТАТА ЛӐСӐЛЛӐ ЙЫВӐҪСЕМ ХАТӖРЛЕМЕЛЛИ УЙРӐМ ТӖСЛӖХСЕМ ҪИНЧЕН» САККУНӖН 1 СТАТЙИНЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН**

*Чӑваш Республикин САККУНӖ*

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН «ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ХУЛА СТРОИТЕЛЬСТВИН ӖҪ-ХӖЛНЕ ЙӖРКЕЛЕССИ ҪИНЧЕН» САККУННЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН**

*Чӑваш Республикин САККУНӖ*

**ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН «АЧАЛЛӐ ГРАЖДАНСЕНЕ ПАТШАЛӐХ ПОСОБИЙӖСЕМ ПАРАССИ ҪИНЧЕН» САККУННЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТЕССИ ҪИНЧЕН**

# Çемье

Ятарлă кăларăм

*Килĕшӳ*

## Пурнăçăн кашни саманчĕпе киленессишĕн



● 2013ç.Адюковсем çĕр улми пуссинче.

***«Анне, паян эсир шкултан таврăнсан йĕлтĕрпе ярăнма тухатпăр-и? Аттепе калаçрăм – вăл килĕшрĕ», – чĕвĕлтетет ирхине садикелле утнă май пиллĕкри Маша. «Ĕçре каçченех тытăнса тăмасан – тухăпăр. Çанталăк лăпкă, пит-куçа сивĕ чĕпĕтмест», – çĕкленӳллĕ кăмăлпа ĕç кунне пуçлама хатĕр Аслă Елчĕк ялĕнче пурăнакан Адюковсем. Хĕл ларасса кĕтсе ывăннă та – чун канияччен йĕлтĕрпе чупса ĕлкĕрейменха. Спорт тусĕсем вĕсем ку тăрăхра. Тепĕр тесен епле унран юлтăнччăр – кил хуçи Александр Андреевич физкультура вĕрентекенĕ-çке.***

***Вулакана Елчĕк районĕнчи тĕслĕх çемьепе паллаштарма сăлтав пысăк: Адюковсем – «Çулталăк çемйи – 2013» çĕнтерӳçисем. Асăннă конкурсра республикăра малатухнăскерсем Чăваш Ен чысне федерацин Атăлçи округĕнче кăçал, утă уйăхĕн 8-мĕшĕнче – Çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕнче – хӳтĕлĕç. Сăмах май, çемье ăшшине упракан Любовь шăпах çав кун çуралнă.***

### Ăçта вăл – унта йĕрке

Çĕмĕрт куçлă виçĕ чиперккене тата вĕсен ашшĕ-амăшне конкурсăн финалне курма кайсан фойере асăрхарăм. Шалти туйăм шăпах вĕсем çĕнтерӳçĕ пуласса систерчĕ. Ара, конкурса тăратнă портфолиосемпе эпĕ паллашма ĕлкĕрнĕччĕ-çке. Илемлĕ альбом пăхма хитри кăна мар, куçа курăнман ăшă тыткăнларĕ. Улталанмарăм иккен.

Уяв вĕçленсен Адюковсемпе çывăхрах паллашрăмăр. Тин кăна республика Пуçлăхĕн аллинчен парне илнĕскерсен савăнăçĕ пичĕсем çинчеччĕха. Телейлĕ çемьене саламлама тус-тăванĕ васкарĕ. Хăшпĕр вăрттăнлăха вĕсем каласа пачĕç.

Çемье вучахне хĕмлентерсе тăраканĕ кил хуçи мăшăрĕ Любовь Германовна пулни тӳрех курăнчĕ. Вăтам çулсенчи хĕрарăм пултарулăхĕ тĕлĕнмелле тĕрлĕ енлĕ. Аслă Елчĕкри вăтам шкулта чăваш чĕлхипе литературине вĕрентет, тĕп должноçĕ – библиотекарь. Вулавăшра сакăр çул ĕçлекенскер пӳлĕмри йĕркетирпей çинчен нихăçан та манмасть. Чи кирли – вĕренекенсене кĕнекепе туслаштарма темĕнле çул та шыраса тупать. Вулав каçĕ, диспут, кĕнеке презентацийĕ... – унăн пуçарăвĕпе тăтăшах мĕнле те пулин мероприяти иртет.

– Чăваш халăхĕн йăлийĕркине, культурине, чĕлхине упрама, аталантарма хăнăхтарасси – тĕп вырăнта. Ачасемпе юмах вуласа тишкерме юрататăп. Вĕсен шăнăрĕнче – халăх ăс-хакăлĕ-çке. Ĕçченлĕхе, ырăлăха, сăпайлăха вĕрентекен кĕске хайлавсем ачасемшĕн те çывăх. – Хăйĕн профессине юратнине палăртаççĕ Любовь Германовнăн сăмахĕсем.

Ĕçне чун киленĕçĕ вырăнне хуракан пултаруллă вĕрентекен уроксене кăсăклă ирттерет. Инноваци технологийĕсемпе тухăçлăн усă курни пĕлӳ парассине çĕнĕ сĕм кĕртет.

– Пиллĕкмĕшсемпе Трубина Мархвин «Хăнара» калавĕпе паллашатпăр. Урока хатĕрленнĕ май çак хайлава ачасен чунне витермелле мĕнле ăнлантарасси пирки пуçа вататăп. Шухăшласа кăлартăм! Эпĕ кĕске видеофильмсем ӳкерес енĕпе интересленетĕп. Пĕчĕк хĕрĕме Машăна ĕлĕкхилле тумлантартăм. Мăшăрăма лаша кӳлсе килме ыйтрăм. Çапла кино ӳкерме пикентĕмĕр. Шухăшăм ăнăçлă пиçсе тухрĕ. Урокра ачасем куççуль те кăларчĕç: сюжет тăрăх хĕр ача лаша çинчен ӳксе юлать-çке, – каласа кăтартать Л.Адюкова. – Сăвă калас ăсталăха хăнăхтарас тесе вара вĕренекенсене хăйсем каланине диктофонпа çыртарма ыйтатăп. Конкурссенче чи лайăх вулакансен сассине çыртарса пĕрле итлетпĕр.

Тавра курăмне пуянлатас тесе çунни маттур хĕрарăмăн кашни утăмĕнче палăрать. Ашшĕнчен ăна фото ӳкерес ăсталăх куçнă. Уйрăмах пейзажсем чунне çывăх. Çемьепе çут çанталăк ытамĕнче каннă чухне фотоаппарат – чи çывăх «тус» Любăшăн. Хĕрĕсем, уйрăмах тăххăрмĕш класри Катьăпа çиччĕмĕшне çӳрекен Юля, амăшĕн пултарулăхне ăша хывма пуçланă та ĕнтĕ.

– Анне шкулта мана хальлĕхе вĕрентмест: унăн аслăрах классенче уроксем ирттеççĕ. Апла пулин те вăл лайăх учитель пулнине туятăп: ăна ачасем юратнинчен сисетĕп çакна. Унпа нихăçан та тунсăхлă мар, лара-тăра пĕлменскер килти ĕçсенче те вăр-вар. Çĕнĕ япалана ним мар ăша хывать. Тĕслĕхрен, автомашина рульне тытма хăвăртах хăнăхрĕ. Эпир те, ачисем, анне пек пулма ĕмĕтленетпĕр – чи çывăх çынни пирки каласа кăтартать Юля, вĕренӳре питĕ лайăх паллăсемпе ĕлкĕрсе пыраканскер.

Хĕрĕн сăмахне çирĕплетнĕ евĕр амăшĕ чунне уçать:

– Университетра куçăнсăр майпа вĕрентĕм. Тĕрĕслев ĕçĕсене чунтан тăрăшса çыраттăм. Чылай чухне преподавательсем ман ĕçсене тĕслĕх вырăнне ыттисене кăтартатчĕç. Леонид Петров чĕлхеçĕ шӳтлесе те илетчĕ: «Адюкова пур-и паян? Апла тăк ушкăнра йăлтах йĕркеллĕ».

### Туслăх ĕçре туптанать

Çемье пуçĕ те, унăн мăшăрĕ те вĕрентекен пулнин витĕмĕ кил-йышра пур-и? Çакăн хуравне Адюковсемпе хăйсемпе шырарăмăр. Пуренчен те маттур пулма ăнтăлакан Любовь та, яланах шăнăр вырăнĕнчи çирĕп кăмăллă Александр та манпа килĕшсе: «Пурах», – терĕç. Воспитани миссийĕ чи малтанах хăйсен пепкисенчен пуçланнине тĕслĕхсемпе çирĕплетрĕç. Ырă пулма, ялйыша хисеплеме хăнăхтарасси – вĕсен тивлечĕ. «Ваттисен кунĕ тĕлне, сăмахран, шкул ачисемпе тĕрлĕ мероприяти ирттеретпĕр. Хĕрĕмсем хамăртан та пуçаруллăрах пулчĕç. Катьăпа Юля открыткăсем хатĕрлесе хамăрăн урамри кашни ватă патне çитнĕ. Пĕр кӳршĕ урама та тухса çӳрейместчĕ – çакăн пек хисепе кĕтменскер куççуль те кăларнă иккен», – ăшшăн аса илчĕ хастар хĕр ачасен амăшĕ.

Çемьере чăннипех килĕшӳ хуçаланнине Адюковсемпе калаçнă май ĕненме кăткăс мар: пĕр-пĕрне куçран ăшшăн пăхса калаçниех кăтартать çакна. Çемье туслăхĕ мĕн çинче тĕревленет-ши?

– Пĕрлехи ĕç çинче – ытларах, – кил хуçи сăмахĕ татăклăн илтĕнет.

Мăшăрĕ Любовь Германовна шухăша малалла тăсать:

– Эпир аттепе аннен – виçĕ хĕр. Ача чухне кашнин килти ĕçре хăйĕн тивĕçĕ пурччĕ. Пĕри чашăк-тирĕк çăвать, тепри... Манăн вара шыв кӳмеллеччĕ, кăмака хутма вут-шанкă, кăмрăк илсе кĕмеллеччĕ: ун чухне ялсенче газ пулман вĕт. Пахчара ĕçленĕ чухне хĕрĕмсем йăран пайлаççĕ. «Пирĕн укçа йăранĕсем», – теççĕ шӳтлĕн. Кам тăрăшарах ĕçлет – çавна валли кĕркунне хавхалантару вăйлăрах пуласса пĕлеççĕ-çке.

...Сисмесĕрех 2014 çула пурăнса çитрĕмĕр. Аслă Елчĕкри пурнăçа юратакан çемье тĕслĕхĕпе хавхаланса хăйсен «йăвине» те ăшăлăх ытларах кĕртекенсен йышĕ ӳстĕрччĕ. Кил-йышра килĕшӳ пур тăк çын ырă ĕçсем патне çеç туртăнĕ.

■ Ирина ИВАНОВА

## «Мĕнле арăм пулĕç-ши?»

***Çемьеллисем хăйсене ăçта тата хăçан ытларах ирĕклĕ туяççĕ? Паллах, командировкăра е темиçе уйăхлăха аякка ĕçлеме кайсан... Хусахсемпе хĕрсем вара – яланах ирĕклĕ.***

Ку хутĕнче те Воронеж облаçĕнчи Усмань районĕнчи «Красинский» хуçалăха ĕçлеме хусахсемпе хĕрсем ытларах пычĕç. Пурăнма пурне те пĕр общежитие, анчах уйрăм пӳлĕмсене вырнаçтарчĕç. Эпир пĕр пӳлĕме çулланнă икĕ арçын тата пĕр хусах лекрĕмĕр. Юнашар пӳлĕмре – хĕрарăмсемпе хĕрсем. Каярахпа пĕри, Канаш тăрăхĕнчен килнĕскер, туй пĕркенчĕкĕ айĕнче икĕ хутчен те тăрса курни, тепри Шупашкарти Атăл хĕрринчи пĕр кафере шурăмпуç хăпаричченех ура тупанĕ ыратма пуçличчен ташлани çинчен пĕлтĕмĕр. Анчах та кунта унашкал майсем çук: талăкра вун икĕ сехетрен кая мар улмуççи тавра ташласан хăвăн ятна та манатăн. Çапах та шултра сăмахсемпе перкелешекен Дима, стена лешенчи пӳлĕмре каçсерен ихĕлтетекен Людăпа Светлана хăйсен чунĕсене йăпатма май тупрĕçтупрĕçех. Ку тĕлĕшпе чи малтан Дима пуçарулăх кăтартрĕ.

Столовăйĕнче апатланнă хыççăн юлнă çăкăр татăкĕсене вăл çĕпре тума типĕтрĕ. Ĕç укçи шучĕпе буфетран темиçе килограмм сахăр туянчĕ. Вĕсене шыв тултарнă пластик кĕленчесене чăмтарчĕ те эрнерен пăрака хатĕр те. Пĕр каçхине стенана чăмăрĕпе танклаттарса Людăпа Светланăна чĕнсе илчĕ. Лешсем çитсен Дима кравать айĕнчен пăрака кĕленчине туртса кăларчĕ. «Коньяк!» – терĕ.

Хĕрсем пĕчĕккĕн сыпа-сыпа пĕрер стакан пушатрĕç. Килĕшрĕ пулас вĕсене «коньяк» – татах тултарма ыйтрĕç. Кăштахран Светлана Димăн йăмăкĕ пулнине пĕлтĕмĕр. Ӳсĕрĕлме пуçланă Люда Светланăна куç хĕсрĕ те – лешĕ тайкалана-тайкалана коридора тухрĕ. «Эй, ваттисем, эсир çывăратăр-и?» – чĕнчĕ пире Дима. Эпир паçăрах тĕлĕрме пуçланăччĕ-ха. «Вăт çавсене каччă ил. Мĕнле арăм пулĕç-ши?» – ирхине çапла ятлаçса ĕçе утрĕ мана хирĕç кравать çинче çывăракан Шупашкар район çынни Петр Козлов. Эпĕ юриех утиял айĕнчен сăнаса выртрăм. Тьфу, намăссăрсем! Тепĕр тесен, халĕ çĕрле улмуççи айĕнче те сивĕ мар. Эпир яш чухне ясар шухăшпа пурăнман». «Пурнăç улшăнать, çавна май çынсем те улшăнаççĕ», – хушса хутăм эпĕ.

■ Александр МОКИН.

Шупашкар

*Пĕр районтан*

### Ватă çын – ял илемĕ

Çак каларăш Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпӳрт ялне тӳрреммĕнех пырса тивет. Кунта пĕр урамра тăватă ватă – К.Кудрявцева, Е.Капитонова, Е.Никольская, М.Иванова – килĕштерсе пурăнать. Кил хуçалăхĕн тилхепине пурте çамрăкрах ăрăва тыттарнă пулин те çуртри, картиш-пахчари ĕçсенчен пĕри те пăрăнмасть. Ял çынни выльăхсăр пурăнмасть. Ĕне, качака-сурăх, хур-кăвакал, кролик – пурне те усрама тăрăшаççĕ. Вăй питти çын ĕçе ирех каять те – килте ватă юлни мĕн тери шанчăклă!

Çурт çумĕнчи çĕр лаптăкĕнче çĕр улми, сухан-севок, выльăх кăшманĕ, кишĕр чылай çитĕнтереççĕ Патăрьел тăрăхĕнче пурăнакансем. Çӳлерех асăннă ватăсем шăм-шак хытнине пăхмасăр йăран çинчен кĕме пĕлмеççĕ. Канма та пĕрлех лараççĕ: хуçалăх ани çинче ушкăнпа ĕçлени асĕнчен тухмасть мар-и?

Ушкăнра чи асли – Мария Николаевна. Иртнĕ çул раштав уйăхĕнче 90 тултарнăскерĕн сывлăхĕ самаях çирĕп-ха. Темĕнле йывăрлăха та чăтса ирттерме тивнĕ – пурнăç хуçайман патварскере. Мăян пашалăвĕ çисе ӳссен те...

### Улми йывăççинчен...

...аякка ӳкмест теççĕ. Ачисем ашшĕамăшĕ пек пулнине пурнăçра темиçе хут та курса ĕненетĕн. Патăрьелĕнче пурăнакан Кудрявцевсем, сăмахран, хăйсен ĕçченлĕхне пурнăç панă пепкисене те кăкăр сĕчĕпех сăрхăнтарса кĕртнĕ. Районти тĕп библиотекăра амăшĕпе хĕрĕн ылтăн аллисем ăсталанă тĕрĕсен куравĕ пĕр уйăха тăсăлчĕ. Светлана Николаевна асамат кĕперĕн пур тĕсĕпе усă курса 36 ӳкерчĕке пир çине куçарнă. Хĕм сапакан мăкăнь е юмахри ырă сăнар – пурне те чун хавалĕпе тĕрленĕ хĕрарăм. Хĕрĕ Оксана Витальевна пултарулăхне амăшне курса туптанă. Яваплă ĕçре, «Россельхозбанк» специалисчĕнче, тăрăшать пулин те чун киленĕçĕ валли те вăхăт тупать. Çамрăк хĕрарăм илемлĕ тĕрĕсем кил ăшшине вăйлатнине ĕненет, çавăнпа ывăнсан та ал ĕçне пикенме ӳркенмест.

■ Влада МИРСКАЯ

*Телейлĕ самант*

### Аптраман таврашсем йышланчĕç!

Елчĕк районĕ пирки чăвашлăха упракан утрав тесе кам чи малтан каланине пĕлместĕп – çынни йăнăшман курăнать. 2014 çулта ку тăрăхра чи малтан кам çуралнă тетĕр? Чăн чăваш каччи! Аслă Пăла Тимеш ялĕнче пурăнакан Вячеслав Васильевичпа Вера Петровна çавăрнă çемьере иккĕмĕш кайăк кăрлач уйăхĕн пуçламăшĕнче тĕнчене килнĕ. Ашшĕпе амăшĕ кĕтнĕ пепкине Атнер ят хума тĕв тунă. Телейлĕ мăшăра савăнăçлă пулăмпа районти ЗАГС уйрăмĕн ертӳçи Валентина Спиридонова саламланă: «Сирĕн, аслисен аллинче – пĕчĕк чун, вăл кӳрекен телей вара иксĕлми пысăк пултăр!» Пирĕн редакци ĕçченĕсем Атнер Николаев Аптраман таврашсен тивĕçлĕ тăсăмĕ пуласса шанса ăна вăрăм ĕмĕр, хурçăран çирĕп сывлăх сунаççĕ.

■ Анна КУПРИЯНОВА

*Тĕслĕх*

## Çӳпçипе хупăлчи – кӳршĕсемех

***Канаш районĕнчи Карăклăра пурăнакан Ольга Архиповна Михайлова /хĕрчухнехи хушамачĕ – Архипова/ çуралнă килĕнче арçын вырăнĕнче пулнă.***



Ашшĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçинче пуç хунă хыççăн килйышра пысăк ĕçсене арçын тăвассине шанмалли пулман. Ольгăн аппăшĕ Канашра финанс техникумĕнчен вĕренсе тухнă та аякри çĕре ĕçлеме кайнă. Çемьери кĕçĕн хĕрĕн те вĕренес туртăм пулнă. Анчах ачисенчен пĕрне те килĕнчен ярас килмен амăшĕн. Хресчен килĕнче ĕç темĕн чухлех. Кӳршĕрех сăпайлă та ĕçрен хăраман каччă Анатолий пурăннă. Çапла пĕрпĕрин куçĕ умĕнче çитĕннĕ Ольăпа Толя çемье чăмăртанă. Унтанпа килес çуркунне 55 çул çитет ĕнтĕ. Çур ĕмĕр ытла пĕр çулпа утакансем халĕ те килĕштерсе пурăнаççĕ. Ял-йышра, таврара чыс-хисепре пулнăран, ачисене тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе воспитани панăран вырăнти влаç органĕсем сĕннипе Михайловсене 2013 çулта «Юратупа шанчăклăхшăн» орденпа наградăланă.

– Эпир çамрăк чухне хĕрарăмсем пилĕк ачаран сахал çуратманпа пĕрех. «Нормăран» катăк ан пултăр тенĕ– пĕрин хыççăн тепĕрне çуратнă. Хуняман куçĕ курмастчĕ. Ăна та пăхмалла пулнă – ачасене унпа шанса хăвараймanран ĕçе пит васкасах тухман. Пĕр хушă Уçырмари кирпĕч заводне кĕрĕшнĕччĕ. Производство аван пынă – 5 сехет тĕлне кăмака умĕнче пулмаллаччĕ. Паллах, çемьене йывăр килетчĕ. Каярах Карăклăри шкул столовăйне вырнаçрăм. Чăн та, ĕç кил çумĕнче пулни аванччĕ. Çав тери килĕшетчĕ унта – 54 çулта ĕçлеме пăрахрăм. Чун туртнипе пĕрмаях шкул еннелле пăхса макăраттăм. Хĕлле, ĕç çукрах чухне, пушшех тунсăхлаттăм, – иртнĕ кунсене аса илет 76-ри хĕрарăм. – Юрать, ялти çын выльăх тытать...

Анатолий Михайловичăн ачалăхĕ мăшăрĕнни пекех – çăмăл килмен. Ашшĕсĕр ӳснĕскерĕн амăшĕ арçын ача 12 тултарнă çул суккăрланма тытăннă.

– Канашра механизаци шкулĕнче вĕрентĕм. Çавăн чухне пире, сухаçăсене, 8 уйăхлăха Алтай тăрăхне уçман çеремсем çине ячĕç. Йывăрлăха пăхмасăр кунĕн-çĕрĕн тенĕ пек техникăпа ĕçлеттĕмĕр, – аса илет иртнĕ кунсене саккăрмĕш теçетке çула ваклană çын.

12 çултах колхозра кĕтӳçĕре çӳреме пуçланăскер хресчен йывăрлăхĕсене самай тӳснĕ. Кирек мĕнле шаннă ĕçе те тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланине кура инженер-механик, мастерской ертӳçин должноçĕсенче те ĕçленĕ. Техника валли саппас пайсем шыраса кӳршĕ районсене те çитнине каласа кăтартать. Вăрман турттарма кайсан çур çĕр иртсен киле çитни сахал пулнă-и?

Çапах та çамрăк, вăй питти кунсене савăнса аса илет пенсионер: «Колхоз кĕрлесе тăратчĕ. Ĕçлес текеншĕн тархасшăн – тарличчен тăрмаш. Канма вăйпах яратчĕç-ха тата. Курортра кашни çулах пулаттăм: ăнсăртран аммиакпа сиенленнĕрен сывлăха тĕрĕслеттерсех тăма хистетчĕç. Пĕрре çапла тухтăр патне кайсан пыра операци тумалла терĕç. Медсестра ман çине темĕн каласшăн пек пăхать. Коридора тухсан вăл мана операци хыççăн пурнăç вăрах тăсăлмасан та пултарни пирки асăрхаттарчĕ. Ун чухне ял хуçалăх институтĕнче шăпах курссенче вĕренеттĕм те – каярах килĕп тесе шантарса тухса кайрăм. Паллах, хам текех ура та ярса пусман. Шăпа темле килсе тухма пултаратчĕ...»

Телее, паян та ыр-сывах-ха Анатолий Михайлович. Хăнăхнă йăлапа çуллен хăйне упрас тĕллевпе санаторире сипленет. Эрех-пируспа айкашманскерĕн кĕлетки халĕ те йăрăс, сăнĕ çутă. Çуркунне çитессе чăтăмсăррăн кĕтет сад-пахча ăсти. Ун чухне вĕсем мăшăрĕпе пӳрте кĕме те пĕлмеççĕ. Темĕн чухлĕ улма-çырла тĕмĕ вĕсен хуçалăхĕнче. Иçĕм çырлипе аппаланма килĕштерессĕ – 21 тĕпе çитерне ăна.

Чун киленĕçĕ пирки сăмах тапратрăм пулсан кил хуçи мăшăрĕн ал ĕçĕ çинчен каламаллах. Палантин, тапăчки, пĕчĕк минтер – мĕн тери илемлĕ çыхнă! Çакăн пек чун хавалĕ пур тăк – тунсăх валли хĕллехи кун та вырăн çук! Çулла-и? Михайловсен килĕ ун чухне вĕллене çаврăнать тейĕн: мăнукĕсен, вĕсен ачисен хаваслă сассипе тулать. Пĕр сăмахпа – асламăшĕкукамăшĕн, аслашшĕ-кукашшĕн килĕнче пурнăç чăнахах вĕресе тăрать.

■ Ирина ПУШКИНА

*Юбилей*

## Чăн ылтăн – ачасем

***Мăн Шетмĕ ял тăрăхне кĕрекен Кушар ялĕнчи Федосия Александровнăпа Николай Егорович Гавриловсем пĕрлешнĕренпе çурĕмĕр çитнине паллă турĕç.***



● Гавриловсем хăнасемпе пĕрле.

«Ылтăн туйччен пурăнма арăмĕн ылтăн кăмăллă пулмалла, упăшкине вара тимĕр пек чăтăмлăх кирлĕ», – теççĕ халăхра. Ылтăн – хаклă йышши металл. Шăратса кăлариччен ăстаçă малтан ăна хутăшсенчен тасатать. Гавриловсем те 50 çул хушшинче хăйсен юратăвне тасатнă, якатнă, çутатнă.

Федосия Александровнăн ачалăхĕ çăмăл килмен. 4 класс вĕреннĕ хыççăн ĕçе тӳрех кӳлĕннĕ. Тивĕçлĕ канăва «Мичуринец» хуçалăхра ĕçлесе тухнă: рабочи те пулнă, мăшăрĕпе пĕрле 30 çул ытла сысна пăхнă. 2 çул каялла «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ.

Николай Егорович та Кушарсемех. Мăн Шетмĕ шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн çар тивĕçне пурнăçланă. Ĕмĕрĕпех ялта, каярахпа Пăрăнтăк комплексĕнче сысна пăхнă. Çуллен кашни тĕп амаран 20-28-шар çура илнĕ. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн ăна 1981 çулта «Чăваш АССР ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят панă, çавăн пекех «Хисеп Палли» орденпа, «РСФСРăн хура тăпраллă мар зонине çĕнетсе улăштарнăшăн», ВДНХан пăхăр тата кĕмĕл медалĕсемпе наградăланă, РСФСР тата ЧАССР Аслă Канашĕсен Президиумĕсен Хисеп грамотисемпе чысланă.

Ĕçчен те телейлĕ мăшăр 3 ача пăхса çитĕнтернĕ, пурте аслă пĕлӳллĕ, çемьеллĕ. Елена хăйĕн телейне Яманак ялĕнче тупнă. Мăшăрĕпе икĕ хĕр ӳстернĕ: пĕри учитель, тепри институтра вĕренет. Сергей Ленинградри медицина институтĕнче вĕреннĕ, çар тивĕçне Афганистанра пурнăçланă, пĕр вăхăт районти тĕп больницăра ĕçленĕ, халĕ Шупашкарта судмедэкспертра вăй хурать. Мăшăрĕпе ывăл çитĕнтереççĕ. Антонина агронома вĕренсе тухнă, вĕсен – 2 хĕрпе ывăл. Мăнукĕсемпе чунтан-чĕререн савăнаççĕ Гавриловсем.

Ылтăн туй ячĕпе Федосия Александровнăпа Николай Егоровича ачисемпе, тăванхурăнташĕпе пĕрлех Мăн Шетмĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Полина Николаева, районти ЗАГС пайĕн пуçлăхĕ Елена Павлова, район администрацийĕн ял хуçалăх тата экологи пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ /зоотехникĕ/ Геннадий Матвеев, вырăнти ветерансен канашĕн председателĕ Иван Ильин, вулавăшра ĕçлекен Раиса Герасимова ăшшăн саламларĕç, алла-аллăн тытăнса, шăкăл-шăкăл калаçса нумай çул пурăнма çирĕп сывлăх, кил ăшши сунчĕç. Вырăнти артистсем вара вĕсене хаваслă юрăсем парнелерĕç.

■ Виктор ДАНИЛОВ.

Красноармейски районĕ.

Автор сăн ӳкерчĕкĕ

**Кăларăма Ирина ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

*Пулать вĕт!*

# Ухмахсене шыраççĕ ахăртне

Хаçатсенче те, телекурав кăларăмĕсенче те реклама «çум курăкĕ» пек сарăлчĕ. Лавккасенчи хаксене сăнатăн та тĕлĕнетĕн: кунта та – тахçанах йăлăхтарнă реклама. Пур тавар хакĕ те «99» е «90» цифрăпа вĕçленет. 10000 тенкĕ тăракан телевизора «9999 тенкĕ çеç тăрать» тесе йăпатаççĕ. Пĕр супермаркетра /янăрать вĕт!/ хаксене юриех сăнаса çӳрерĕм, хăшне-пĕрне çырса та илтĕм. Сăмахран, «Черная карта» кофе – 59-90 тенкĕ, «Вдохновение» шăккалат канихвет – 169-90, «Россия» шăккалат – 35-90, «Малютка» пăтă – 69-90 тенкĕ. Ыттисен те çавăн евĕрлĕрех.

Центрти пĕр хаçатри пĕлтерӳсене вуласа ларатăп: «Хĕрарăм çăм атти – 999, арçын çăм атти – 1399, ачапăча çăм атти – 799 тенкĕ. Саккаса киле çитерсе панăшăн – 199 тенкĕ». Йӳнĕрех пек кăтартасшăн-ши?

Центрта тухакан нумай хаçат, кашни кăларăмрах 1 млн та 500 пин тенкĕ тăракан çăмăл автомобиль сĕнет, çуралнă кунра телей кӳме шантарать. Ара, эсĕ çут тĕнчене чӳк уйăхĕн 21-27-мĕшĕсенче килнĕ тĕк саншăн сейф уçăлать: 1 млн та 800 пин тенкĕ шăнкăрт кăна санăн кĕсйӳне кусса выртĕ. Кĕтсе ларах!

Реклама хуçисем çынна çав тери ухмах вырăнне хураççĕ-ши? Шухăшламасăр, ăссăрла ĕç тăвакан çынна халăхра паян «тăхăр вун тăххăр» е «тăхăр вун» тесе хакласçĕ. Ку унăн ăс-тăнĕ кăштах катăккине, çĕр процентĕпех маррине пĕлтерет иккен. Çавăн евĕрлĕ рекламăна вулатăн та пире пурне те «99-сем» вырăнне картнăн туятăн.

Улталама пĕлекен, сăхă çынна халĕ пултаруллисен, «пурăнма пĕлекеннисен» шутне кĕртеççĕ. Куç кĕрет улталама пăхакансене «Пирĕн хушăра «тăхăр вун тăххăрлисем» пулсан та – питĕ сахал», – теессĕм килет. Çынна çын хăçан хисеплеме тытăнĕ-ши?

■ **Ревокат МОИСЕЕВ.**
Комсомольски районĕ

# Приставсăр килне кĕреймен

***Упăшкипе арăмĕ хушшинче хура кушак чупса иртесси пулкалать. Г. та мăшăрĕнчен уйрăлнă. Çавăн хыççăн хĕрарăм ăна Шупашкартихваттерне, гаражне кĕме чарнă. Арçыннăн вĕсемпе, çав шутра хваттерĕн пĕр пайĕпе усă курмалли право пулнине пăхмасăрах...***

Г. хĕрарăмпа хирĕçес-харкашас темен, Шупашкарти Мускав районĕн судне тавăç тăратнă. Тĕрĕс тунă. Суд арçыннăн хваттерпе гараж боксне кĕрсе çӳремелли ирĕкне çирĕплетнĕ, мăшăрĕн ăна чарма юраманнине палăртнă. Суд йышăнăвне пурнăçламалли хут Федерацин суд приставĕсен службин республикăри управленине çитнĕ.

Пристав производство пуçарнă та тивĕçлĕ йышăнава хайхи хĕрарăма панă, суд йышăнăвне пурнăçламаншăн явап тыттарма пултарасси пирки асăрхаттарнă. Лешĕ саккунпа текех урлă пулас темен, пристав умĕнчех Г.-на хваттер, гараж алăкĕсен уççисен дубликачĕсене панă: çул уçă!

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

# «Çывăх тус – кушак аçи...»

Çĕр-шыв тăрăх çӳресе тем те куратăн, такампа та паллашатăн. Юлашки хутĕнче вун икĕ ентешпе Воронеж облаçĕнчи Çĕнĕ Усман районне çитрĕмĕр. Ку тăрăхра пурăнакансен çурт-йĕрĕ капмар. Стенисене тул енчен хăма çапса хупланă, сарă, симĕс тĕссемпе сăрланă. Кашнин умĕнчех – гараж. Ытларахăшĕ кунсерен тенĕ пекех хĕрĕх çухрăмри Воронежа ĕçе çăмăл автомашинăпа çӳрет. Çавăнпа ку тăрăхри пан улми сачĕсенче, фермăсенче ĕçлеме ытларах украинсем, чăвашсем тара кĕрĕшеççĕ.

– Укçашăн мар, эрех-сăра ĕçме пăрахас тесе çакăнта çити килтĕм, – тет Шупашкар районĕнчи Ишек çывăхĕнчи пĕр ялта пурăнакан Николай Самойлов.

– Тĕнче хĕрринех çитмелле-и вара уншăн? Килте май çук-и умри черккене аяккарах шутарса лартма? – юриех калаçтарма пикентĕм ентешĕме.

– «Симĕс çĕлен» ытамĕнчен хăтăлас текенсене ултă çул каялла Тула облаçне ĕçлеме кайсан тĕл пулнăччĕ-ха.

– Писрĕç-и вара? – кăсăкланчĕ йăхташ.

– Унта эрех мар, сăра çинчен те аса илме май çукчĕ. Кĕреçене кунĕпе алăран ямасан е улмуççи çине упăте пек улăха-улăха ансан каç пулттипе алла кашăк тытма та вăй юлмасть, – калаçăва тăсрăм эпĕ.

– Халĕ мухмăр-сухмăрпа аптрамастăп, апат та лайăх анать. Пан улми пуçтарнă е татнă чухне çамрăксенчен юлмастăп. Пирус туртма пăрахнăранпа ытлашши ывăнмастăп. Кунта килнин сăлтавĕ эрехре çеç мар-ха, арăмпа хĕрĕн чĕлхисем чараксăрри йăлăхтарчĕ. Вĕсем Шупашкарта пурăнаççĕ. Эпĕ вара асаттен тайăлма пуçланă çуртĕнче тĕплентĕм. Пурнăçа кушак аçипе пайлатăп. Эпĕ апатланнă чухне сĕтел çине улăхать, кил хушшине тухатăп – ман хыççăн лăпăстатать, – чунне уçать ентешĕм.

Воронеж облаçне киличчен Николай Мускав çывăхĕнчи Рогачево поселокĕнче ĕçленĕ.

– Унта услови япăххахчĕ. Кунне пĕр хут апатлантаратчĕç. Çĕр улми, ытти пахча çимĕç суйласси çăмăл ĕç марччĕ. Çумра укçа кăштах пурччĕ те, пĕрле килнисем апат-çимĕç туянма ыйтса илетчĕç. Тавăрса парасси пирки аса илекен пулмарĕ. Шĕвĕртрĕç эппин.

Укçи кунта кирлех те марха: апат тулăх. Телефонпа калаçма çеç май çукрах. Хулари хĕрĕмпе çыхăнасшăнччĕ. Пĕрле ĕçленĕ хĕрарăма унпа калаçтартăм, ăна юриех: «Аçуна качча тухатăп», – теме хушрăм. Çавăн хыççăнах тăван хĕр кивĕ çи-пуçа хуларан тĕп киле пырса пăрахнă.

Эпĕ пĕчченлĕхрен хăрамастăп, пӳрте сутса Ишекри ветерансен çуртне кайма пултаратăп. Пенси параççĕ, кушака пăрахса хăварма вара шел, – пытармарĕ çĕнĕ юлташăм. Утмăл пиллĕкри Николайăн пурнăçĕ вăхăтăн-вăхăтăн ăнман темелле. Сакăр класс пĕтернĕ хыççăн газосварщик ăсталăхне вĕреннĕ вăл. Хăй каланă тăрăх – сехет, радиоприемник юсама ăста. Пирĕн çарсен Германири ушкăнĕнче хĕсметре тăнăскер, сержант-водитель пулнă.

– Отпуск парсан килти пăтăрмахсене хутшăнас мар тесе ăна чаçрех ирттертĕм. Кайран унтах хăварасшăнччĕ, ухмах пултăм – юлмарăм, – аса илет иртнине пенсионер.

Пурнăç темĕнле авсан та Николай пуçа усасшăн мар. Кăмăлĕпе вăл лăпкă, тавлашăва, хирĕçĕве хутшăнмасть. Ют тăрăха ĕçлеме килнине хăйĕн хуçалăхĕнчи хуралтăсене юсама укçа кирлипе сăлтавларĕ.

■ **Александр МОКИН.**
Шупашкар районĕ

*Шухăш*

# Çеçпĕл мĕнле вилнĕ?

Эпĕ Юхма Мишшин «Ултавпа Чăнлăх» романĕ çинче кăна кĕскен чарăнса тăрасшăн. Çыравçăн çĕнĕ ĕçĕ хамăрăн кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишшин пурнăçĕ, вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрĕнче туса хăварнă ырă та пархатарлă ĕç-хĕле пĕр хитрелетсе-эрешлемесĕр çырса кăтартнипе çыхăннă. Тӳрех ыйту тухса тăрать: «Ара, кун пирки Юхмаччен нумай çырнă-çке? Нивушлĕ халăх писателĕ Юрий Збанацкин «Çеçпĕл», Петр Чичкановăн «Кăвар чĕре» романĕсен сюжечĕсене кĕмесĕр юлнă çĕнĕ материалсем шыраса тупнă? Çак ыйтăва паратех вулакан, мĕншĕн тесен сарăмсăр вилнĕ хыççăн та хăй çинчен нумай калаçтаракан поэт паян та пире çак калаçу ӳлĕмрен те малалла тăсăласси пирки ас тутарсах тăнăн туйăнать.

Çеçпĕл Мишши 20 çултах Шупашкарта Революци трибуналĕн пуçлăхĕ пулнă, Чăваш автономи облаçне туса хурсан, ăна облаçăн Ĕç тăвакан комитечĕн членне суйлани, вăл кайран çав комитетăн юстици пайĕнче ĕçлени, халăх тăшманĕсем çĕнĕ саманан çĕнĕ юрăçне темĕн тĕрлĕ «ярлăк» çакса айăплама тăни «Ултавпа Чăнлăх» романччченех паллăччĕ ĕнтĕ пирĕншĕн. 1921 çулхи утă уйăхĕнче Çеçпĕл Мишши Крыма, Евпаторири санаторие сывалма кайнине, унта Украина сăвăçĕпе, Федор Пакрышеньпе паллашнине, Крымран Киев хулине пынине, çакăнтах Хĕрлĕ Çар салтакĕн тумне тăхăннине, чире пула хăйне çартан хăтарнине, çакăн хыççăн 1922 çулхи пуш уйăхĕн пуçламăшĕнче Киевран çуранах Кашкăр сăрчĕ ялне – Крымра туслашнă сăвăç патне çул тытнине Юхма çыриччченех пĕлнĕ эпир. Чăваш халăх писателĕ вара Çеçпĕл вилĕмне çĕнĕлле сăнлать /романăн «Юлашки хĕл» сыпăкĕ/. Тăван тăрăхран аякра хӳтлĕх тупнă сăвăçа пĕр шухăш канăç памасăр асаплантарать. Хăйне çуратса ӳстернĕ Чăваш çĕр-шывĕнче – хăрушă выçлăх. Мĕнле пулăшмалла тăван халăха, мĕн тумалла? Михаил Кузьмин, Остер хулинче уесри çĕр ĕç пайне ĕçе кĕнĕскер, тӳрех Атăл тăрăхĕнчи çынсене пулăшма тĕллев тытать. Çав вăхăтра Рубис профессорăн хĕрĕпе, аслă шкултан вĕренсе тухнă Наталия Николаевнăпа калаçма ăна уйрăмах кăмăллă. Вĕсем иккĕшĕ алăпа çырса литература журналĕ кăларасшăн...

Анчах самани лăпкă мар-çке. Коммунизм, революци идейисене пĕтĕм чунĕпе парăннă кăварлă поэт ыттисене те хăй пекех таса тесе шухăшланă-мĕн. Юнашарах Савченко пек сĕмсĕрсем çӳренĕ. 1922 çулхи утă уйăхĕн 15-мĕшĕнче Çеçпĕл Мишшишĕн кăвак тӳпене хĕвел юлашки хут ярăнса тухнă. Ăна Кирихеево ялне /унăн ун чухне çав яла каймалла та пулман, анчах Савченко хушнипе çула улăштарнă/ тырă хатĕрлес ыйтупа лашапа кайма тухсан Савченко «йыттисем» вилмеллех хĕнесе пĕтернĕ. «Халь мĕн тумалла кунпа? – хăйсем вĕлернĕ Çеçпĕле тепре пырса тапрĕ хура сухалли. – Кунтах вырттăр-и?» – «Эс мĕн? – тĕлĕннĕ пек пулчĕ ут çинче ларакканни. – Пĕтĕм милицие каллех ура çине тăратасшăн-и? Лав çине хурăр та пĕр-пĕр аçампа витĕр. Çын ан куртăр... Каç пулсан вара çак сад пахчи варринех илсе килĕр те çӳллĕ йывăçран çакăр... Хăй çакăннă тесе калачăр. Милицие те çăмăллăх пулать», – вулатпăр романăн 279-мĕш страницинче.

Çеçпĕл пурнăçĕн юлашки сехечĕсенче Савченко пек сăтăрçăсен совет влаçне хирĕç тунă ĕçĕсем çинчен Чрезвычайлă Комитета пĕлтерсе çырнă-мĕн.

Паллах, «Чăнлăхпа Ултав» романра мĕн çырнине пĕтĕмпех чăнлăх вырăнне хурса йышăнма çук. Манăн шухăшăмпа – Çеçпĕл Мишшин вилĕмĕпе çыхăннă ĕç те вĕçленнĕ теме ирттерех-ха: «Çеçпĕле хĕнесе вĕлернĕ» текен шухăш чăнлăхпа килĕшсе тăнине çирĕплетсе паракан уголовлă ĕçе те никам та пуçарман. Çавна Юхма хăй те хирĕçлемест. «Кун пек роман çырнă чухне писателĕн тĕпчевçĕ кăна мар, философ та, психоаналитик та, пӳлев те пулмалла», – тет вăл.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

*Пĕр портрет йĕрĕпе*

# «Ятăма яман, чысăма ӳкермен...»



***...Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçипуçланиччен виçĕ уйăхмаларах Алексей Рогожина Мордва Республикин Чамзинкăри вăтам шкул директорĕн çумне лартнă. Ку вăхăт тĕлне вăл ирçе вулаканĕсене «Çулсен юрри» сăвă кĕнекине парнелеме ĕлкĕрнĕ. «Сятко» журналта унăн «Гале» тата «Литува» поэмисем кун çути курнă, сăвăç К.Ивановăн «Нарспи» поэмине ирçелле куçарса пичетленĕ. Патăрьел районĕнчи Пăлапуç Нурăс ялĕнче çуралса ӳснĕ А.Рогожин çамрăклахирçесемпе мăкшăсемлайăх пĕлекен çыравçăсен йышне тăнă.***

А.Рогожинăн кун-çулĕ ытла та кĕске килсе тухнă. 1941 çулхи раштав вĕçĕнче хăй ирĕкĕпе алла пăшал тытнă, Воронеж фрончĕн салтакĕсемпе пĕрле Атăлтан Дон патне çити утса тухнă. Çапăçусем тамалнă самантсенче алла кăранташ тытса пуçра капланнă хĕрӳ шухăшсене пĕчĕк блокнота çырса хума васканă. Унăн чылай хайлавĕ дивизи тата арми хаçачĕсенче пичетленнĕ. Вĕсенче хаяр тăшмана çапса аркатассине шаннине кăтартакан вичкĕн шухăшсем палăрнă. Çапла вара А.Рогожин мирлĕ çĕр çине ултавлă майпа тапăнса кĕнĕ нимĕç çын çиенĕсемпе пăшалпа та, чун-чĕре витĕр шăрансаçĕкленсе тухнă хурçă пек пиçĕ сăмахпа та хĕрӳллĕн çапăçнă. «Вилĕмпе куçа-куçăн тăрса çапăçакан паттăр совет салтакĕсем çинчен поэма çырма ĕмĕтленетĕп. Тăшмана Атăл çывăхĕнчен хăваласа ярсан пушă вăхăт тупса чунăма канăç паман ĕмĕт-тĕллеве пурнăçа кĕртетĕпех пулĕ», – тесе çырнă вăл кун кĕнекинче.

1942 çулхи чӳк уйăхĕн вĕçĕнче Рогожин çапăçакан çар чаçне Наум Лисогорский художник пынă. Ирçе поэчĕ унăн шаржĕсене, юморпа сатира жанрĕпе ӳкернĕ ĕçĕсене «Крокодил» журналта пĕрре кăна мар курнă. Н.Лисогорский киличчен кăшт маларах кăна дивизин «За Родину» хаçатĕнче А.Рогожинăн фашизма питлекен памфлечĕ пичетленнĕ. Художнике калама çук килĕшнĕ вăл.

– Манăн памфлет авторĕпе калаçмаллах, – тенĕ паллă ӳнерçĕ, хаçатра ĕçлекенсенчен ăна шыраса тупма ыйтнă. Телее, çав кун поэт редакцие черетлĕ сăвă илсе пынă.

– Акă, çылăхсăр çын хăех çитрĕ, – тенĕ редакцин яваплă секретарĕ Н.Москалев.

– Эсир мана «Крокодил» журнал валли ӳкересшĕн мар пулĕ те? – шӳтлесе ыйтнă поэт. – Хамăн тĕп тивĕçе чунчĕре хушнă пек пурнăçлатăп: ятăма яман, чысăма ӳкермен, кăнтăрла хаяр аçтахапа çапăçатăп, çĕрле Музăна пулăшма чĕнетĕп.

– Мана сирĕн пек маттурсен портречĕсене ӳкерме хушрĕç, – пĕр тăхтаса тăмасăр хуравланă паллă карикатурист. – «За Родину» хаçатăн паянхи номерĕнче кун çути курнă сăвă авторĕ начар çапăçма пултараймасть!

Çапла каланă та ӳнерçĕ поэт-салтакăн сăнне ӳкерме тытăннă... Паттăр çыннăн портречĕ тепĕр кунах «За Родину» хаçатăн пĕрремĕш страницинче çапăнса тухнă...

А.Рогожин çĕнтерӳçĕ салтаксемпе пĕрле фашизмăн тĕп йăвине – Берлина – çитеймен, 1944 çулхи пуш уйăхĕн 24-мĕшĕнче Украинăри Дрогобыч хулишĕн пынă çапăçура паттăррăн пуç хунă. «Поэт нихăçан та вилмест!» çак сăмахсене куçне яланлăхах хупиччен калама ĕлкĕрнĕ вăл.

Йĕпреç районĕнчи Ирçе Çармăсри /сăвăç вăрçăччен çак ялта ачасене вырăс чĕлхипе литературине вĕрентнĕ/ тĕслĕх вулавăш тата Мордва Республикинчи Чамзинкăри вăтам шкул Алексей Рогожин ячĕпе хисепленеççĕ.

■ **Г.ВАСИЛЬЕВ.**



***• Наум Лисогорский ӳнерçĕ тата вăл ӳкернĕ Алексей Рогожин поэтпортречĕн фоторепродукцийĕ***

# Йытă пурнăçĕ

**/Шӳт/**

Салари пĕр урамра икĕ йытă тĕл пулнă.

– Хам-хам! Миçе çул тĕл пулманни! – савăнăçне пытараймарĕ çăмламас Хураçка. – Мĕнле пурăнатăн? Ырханланса кайнă пек туйăнатăн. Эсĕ пĕр хуçа патĕнче службăра тăрать тенине илтнĕччĕ-ха.

– Ан та кала, – салхуллăн сăмах хушрĕ Шарик хĕрлĕ хӳрине унталла-кунталла пĕлтĕртеттерсе. – Мухтанмалли çук. Хуçа нумаях пулмасть пĕр шеллемесĕр патакларĕ, вĕлеретех пулĕ тенĕччĕ...

– Айăпа кĕмерĕн пулĕ те?

– Тем каламалла, хам та пĕлместĕп. Çуралнă кунне уявланă май унăн кермен евĕр çурчĕ кĕрлерĕ кăна: ĕçрĕç-çирĕç, юрларĕç-ташларĕç. Эпĕ, кăкарса хунăскер, выçăпа касăлса тăтăм: пилĕк кунра пĕр татăк та памарĕç. Те пур эпĕ вĕсемшĕн, те çук... Виççĕмĕш кунне кил картине икĕ çамрăк пырса кĕчĕ. Чĕнмен хăнасем килнине пĕлтерсе антăхса кайиччченех хамлатрăм – тухса пăхакан пулмарĕ. Çакскерсем мана кăлпасси касăкне ывăтса пачĕç. Ытти чухне ют çын аллинчи апата хыпманха. Ку хутĕнче выçса вилес килменрен чăтса тăраймарăм – кăп-кап хыпса ятăм. Çав хушăра лешсем витене кĕрсе пĕрер хур хĕстерсе тухрĕç, мотоцикл çине ларса хуланалла вĕçтерчĕç.

Хурсем çухалнине хуçапа арăмĕ уяв хыççăн кăна асăрхарĕç. Шăпах çавăн чухне тип мунча кĕртрĕç мана. Унтан хăваласа кăларса ячĕç. Паян çӳп-çап ешчĕкĕнче чакаланса кăвакарнă çăкăр тупса çирĕм-ха, анчах тăранмалăх пулмарĕ.

Хураçка, ху мĕнлерех пурăнкалатăн, ирĕкрех çӳретĕн-и, апат-çимĕç енчен тулăх-и?

– Начар, тусăм. Выртса тăма вырăн çук, çимеллине пур чухне те тупаймастăп. Халĕ çынсем выльăх пуснă хыççăн çырма хĕррине кăларса пăрахнă пыршă-пакартапа чĕре сури тукалатăп. Малашне темле пурăнмалла?

Пуçлăхсем хушнипе иртнĕ хĕлле пĕр сунарçă çапкаланчăк йытăсене пăшалтан персе çӳрерĕ. «Çавах лектеретĕп», – кăшкăрчĕ ӳсĕрскер. Манăн хӳрене амантрĕ, ыйту палли пек кукăртса хăварчĕ.

– Шарик, эсĕ хулара йытăсене пурăнма хăна çурчĕ пекки туса панине илтмен-и? Кун пирки мана иртнĕ кунсенче сурăхĕсене тылласа пĕтернипе хуçи килтен кăларса янă Туçик хыпарларĕ. Тем, унашкал ырлăх çапкаланчăксем валли мар пулĕ çав...

«Йытă – çын тусĕ», – теççĕ-ха та, анчах та пире юлташ тăвакан тупăнмĕ. Ним ырри те çук. Пĕр сăмахпа каласан – йытă пурнăçĕ...

■ **Рев. РУБИН.**
Комсомольски районĕ

*Спорт хроники*

## Конькипе чупасси

Конькипе чупас енĕпе Хусанта иртнĕ Пĕтĕм Раççейри «Олимп шанăçĕсем» ăмăртуран Чăваш Ен спортсменĕ медальсемпе таврăннă. Республикăри Олимп резервĕсен ятарлă 2-мĕш спорт шкулĕнче Александр Никандров тренер патĕнче ăсталăха туптакан Даниэль Никифоров пьедесталăн чи çӳллĕ картлашки çине тăватă хут хăпарнă. Çамрăк спортсмен 500, 1000, 1500 метрлă дистанцисенче тата масстартра пĕрремĕш вырăн йышăннă.

## Тхэквондо

Елабугăра иртнĕ уçă турнирта 100 ытла хĕрпе каччă хутшăннă. Чăваш Ен чысне унта 5 спортсмен хӳтĕленĕ. Вĕсем 1 ылтăн, 2 кĕмĕл тата 1 бронза медаль çĕнсе илнĕ. 2005-2006 çулсенче çуралнă арçын ачасен хушшинче хулари 57-мĕш шкулта вĕренекен Владимир Паденьков çĕнтернĕ. Унăн тантăшĕсем Михаил Матюковпа Михаил Третьяков хăйсен виçисенче иккĕмĕш кăтартупа палăрнă. Çĕнĕ Шупашкарти 1-мĕш спорт шкулĕнче вĕренекен Алексей Третьяков 31 килограмлă яшсен ушкăнĕнче «бронзăна» тивĕçнĕ.

## Фитнес-аэробика

Самарта çĕр-шыв кубокне çĕнсе илессишĕн пысăк ăмăрту иртнĕ. Унта пирĕн республикăри фитнес-аэробика федерацийĕн командисем те тупăшнă. Оксана Вербина тренер патĕнче ăсталăха туптакан Анастасия Михеевăпа Вероника Романова «Трофи-аэробика» номинацире иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăннă. «Леди Фит» команда «Степ-аэробика» номинацире виççĕмĕш пулнă. Ăмăрту пĕтĕмлетĕвĕпе призерсен йышне кĕнĕ спортсменсем çу уйăхĕнче Австрире иртекен тĕнче чемпионатне хутшăнма тивĕçнĕ.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

*Сывлăх сыхлавĕ*

# Донор кунĕ

***Кăрлачăн 9-мĕшĕнче Республикăри клиника больницинче донор кунĕ иртнĕ. Учрежденин администраци корпусĕнче йĕркеленĕ пунктра виçĕ сехет хушшинче 44 çын 20 литр юн панă. Тĕплĕн тишкернĕ хыççăн унпа республикăри сиплевпе профилактика учрежденийĕсен специалисчĕсем кулленхи ĕçре усă курĕç.***

Сăваплă юхăма хутшăнни доноршăн хăйĕншĕн те пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен çапла майпа унăн организмĕ юн çухатнине хăнăхса пырать. Ытти паха ен те сахал мар: чĕрепе юн тымарĕсен тата иммун тытăмĕн чирĕсене, апат ирĕлтерессипе, пĕверпе хырăм ай парĕн ĕçĕ-хĕлĕ пăсăлассине сирме май килет. Донорлăх чĕрен ишеми чирĕ, атеросклероз аталанас, юн чăмаккаланас теветкеллĕхрен хăтарать.

# Йыш хушăннă

***Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕсен оперативлă кăтартăвĕсем тăрăх – 2014 çулăн малтанхи сакăр кунĕнче пирĕн республикăра 360 пепке /176 арçынача тата 184 хĕр ача/ çут тĕнчене килнĕ.***

Çавсенчен 69-шĕ – çемьери виççĕмĕш тата ун хыççăнхи ачасем – федерацин тата республикăн амăшĕн капиталĕн сертификатне тивĕçет. Унсăр пуçне Чăваш Ен Пуçлăхĕн Указĕпе килĕшӳллĕн вĕсемшĕн уйăхсерен ачасене пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçепе танлашакан пособи тӳлеççĕ. Кăçалхи кăрлач уйăхĕнче унăн сумми 6116 тенкĕпе танлашать. Хальхи вăхăтра асăннă пособие 1791 çемье илсе тăрать.

Палăртма кăмăллă: ачаллă çемьесене паракан социаллă пулăшу мерисем çулсерен ӳсеççĕ. Тĕслĕхрен, федерацин амăшĕн капиталĕ кăçал 20 пин тенкĕлĕх хăпарнă, 429408 тенкĕпе танлашнă. Республикăри амăшĕн капиталĕн виçи – 100 пин тенкĕ. Патшалăх пулăшăвĕн хушма мерине пурнăçа кĕртнĕренпе 4439 çемье унăн сертификатне тивĕçнĕ. Чăваш Енре çавăн пекех нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕ параççĕ.

■ **В.ИЛЬИНА**

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
**РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ**
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

# *Саламлатпăр*



***Юратнă та хаклă шăллăма, куккана – Элĕк районĕнчи Элĕк салинче пурăнакан <u>Александр Андреевич АНДРЕЕВА</u> – 60 çулхи юбилейпе чун-чĕререн тухакан ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Пурнăçăн анлă сукмакĕпе пĕр такăнмасăр утма, пире ырă тĕслĕх кăтартса пурăнма çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, çитĕнӳпе ăнăçу сунатпăр.***

***<u>Ырă сунса Сидоровсен, Кудряшовсен çемйисем.</u>***

* * *

***<u>Гурий Егорович ДУБРОВА</u> пурнăçĕнчи паллă кунпа – 80 çул тултарнă ятпа пĕтĕм чунчĕререн саламлатпăр!***

***Туллителей, çирĕп сывлăх, пултарулăхра пысăк ăнăçу сунатпăр. Тюмень облаçĕнче Чăваш Республикин культурин кунĕсен мероприятийĕсене час-часах хутшăннăшăн, Тюмень тăрăхĕнче тĕпленнĕ чăвашсем çинчен çырнă «На земле тюменской» кĕнекешĕн чĕререн тав тăватпăр.***

***<u>Тюмень облаçĕнчи чăвашсен «Тăван» пĕрлĕхĕ.</u>***

* * *

***Тюмень облаçĕнчи Исет районĕнчи Солобоево салинче пурăнакан <u>Анисия Григорьевна КОРОЛЬКОВĂНА</u> 100 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми хастарлăх сунатпăр. Анисия Григорьевна 1914 çулхи кăрлачăн 9-мĕшĕнче Етĕрне районĕнчи Анат Мучар ялĕнче çуралнă.***

***<u>Тюмень облаçĕнчи чăвашсен «Тăван» пĕрлĕхĕ.</u>***

## ПРОДАЮ

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **дымоходы.** Доставка. Т. 444433.

**17.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, железные двери.** Обшивка вагонкой, пластиком, МДФ. Т. 89050281182.

**150. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**885.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**928.Шерсть овечью** осеннюю, битую. Т. 48-83-57.

## КУПЛЮ

**872.Бычков, коров,** телок, овец, **свиноматок.** Т. 8-927-999-37-37.

## УСЛУГИ

**13.Бурение колодцев,** скважин, **установка** опор ЛЭП; **к/кольца,** бордюры, **брусчатку.** Д-ка. Т.: 8-965-685-89-75, 89276689696.

«Канашсем» ентешлĕх президиумĕ тата ЧР Профессионал писательсен пĕрлĕхĕ Раççей писательсен союзĕн членĕ **Леонид Александрович СТЕПАНОВ /Маяксем/** вилнĕ пирки тăванĕсемпе пĕрле чун-чĕререн хурланнине пĕлтереççĕ.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, “ХЫПАР” ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/

ТЕЛЕФОНСЕМ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, “ХЫПАР”.

Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@mail.ru

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Тираж 7871. Заказ 70.